Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 февраль 4 ернекун

28 (4841)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Çын çине большевикла сисĕмлĕн тата тимлĕн пăхмала

Сталин: тĕнчере пур хаклă капиталсенчен чи хакли тата пур ĕçре те чи кирлĕ капитал—çынсем, кадрсем пулса тăраççĕ тесе каланă сăмахсем кашни руководителĕн партилĕ заповеди пулса тăраççĕ. Сталинла Тĕп Комитет парти организацийĕсен руководителĕсене ырми-канми воспитани парат, вĕрентет, вĕсенчен çын çине куллен тимлĕ пăхма, парти членĕ йĕрки сисĕмлĕ пулма, уншăн тăрăшма хушать. Тĕпком çакна тума хушнине пурнăçа кĕртни—чăн-чăн большевикла сыхлăхăн чи кирлĕ условийĕ пулса тăрать.

Парти Тĕп Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановленинче уçăмлăн та çирĕппĕн каланă: „Çакна анланма вăхăт: большевиксен сыхлăх партирен кăларасси çинчен йĕ кăларнисене парти членĕсен правине тавăрса парасси çинчен тăракан ыйтува татса панă чухне чи пысăккăн асăрханса сӳтсе-йавассине тата йулташа тăрăшассине пĕтерсе лартасси çеç те мар, йăлтах урăхла, пушшех те асăрханса тата йулташла тăрăшса пăхассине пĕлтерет".

Чинсăрланни, бюрократисăм, çын çине формальлĕ пăхни—çаксем вĕсем большевисăмшăн йут йенсем. Партилех вăл—руководител парти членĕ çине йулташла пăхассине, чĕрĕ çын çине, унăн ыйтувĕсемпе нушисем çине тимлĕн çавăрăнса пăхассине пĕлтерет. Руководител партин рйадовой членĕсен сассине сисĕмлĕн итлеме тивĕç—парти ĕç çак таткăлă никĕс çинче тытăнса тăрать те. Массăсене вĕрентмелле çеç мар, тата йăланах, пĕтĕм пурнăç тăршшĕпех массăсенчен вĕренмеле.

Парти ăшĕнчи демократи никĕсĕсене пĕчĕклетсе хăварнă çĕрте, паллах, йулташлăхăн чи пĕчĕк туйăмĕ те, парти членĕн кунçулĕшĕн хыпса çунни те пулма пултараймасть. Парти членĕсем çине уйрăмăн пăхманни, çынсем çине тимлĕн çавăрăнса пăхманни партин хăшпĕр руководителĕсене вуншар пине шухăшласан патне илсе пырать, вĕсем „йединицăсем" çинчен манса кайаççĕ, партин уйрăм членĕсем пирки, вĕсен кунçулĕ пирки тăрăшмаççĕ.

Кашнин çине уйрăмăн пăхасси—пирĕн организацийĕ ĕçре тĕп вырăнта тăрать. Парти членĕсене хакланă чухне, партирен кăларнисен апелляцийĕсене пăхса тухнă чухне кашнин çине уйрăмăн пăхасси—партилĕ руководствăн никĕсĕн никĕсĕ пулса тăрать. Ăшранах партийĕ хирĕçле çынсем çеç етем çине статистикăла йединица çине пăхнă пек пăхма пултараççĕ. Парти членĕсем вунă çын сахалтарах-и йе ытларах-и — вĕсемшĕн пурĕ пĕрех. Вĕсемшĕн пулсан тĕп вырăнта тăраканни—пуринчен те сыхăлăхлăрах çын йатне илтсе пултăр, мĕн те пулин пуласран сыхланса пултăр. Çавăн пек бюрократсем, киревсĕр те хăравçă çынсем, партире тăни йе партирен кăларни çынăн пурнăçĕнче пысăк улшăну пулнине, коммунисчăн çак ыйту вăл—пурнăç йе вилĕм ыйтăвĕ пулса тăнине анланса илме пултараймаççĕ.

Çавăн пек, сăмахран, партин Спас-Деменск (Смоленск облăçĕ) райкомĕн секретарĕ Гришайев хăйĕн ĕçĕнче туна пек, ниме пăхмасăр хурласа пĕтерни тата ниме пăхмасăр халăх тăшманĕ тесе йарлăксем çыпăçтара-çыпăçтара йăни—чĕрĕ çын çине, парти членĕн кунçулĕ çине айăплăн çăмăлттăйла пăхнине пула анчах пулма пултарать. Гришайев, суйа та елекле заявленисене тĕпчесе пăхмасăрах, совхозри парти пухуне „Прогресс" совхози директорне Хайкин йулташа тата политпай начальникне Ильин йулташа партирен кăларма сĕннĕ. Парти пухуйĕ райком секретарĕ каланă сĕнĕве çук сăлтавсенех çирĕплетнĕ. Гришайев, парти массине шута хумасăр, райком бюровĕне директорпа политпай начальникне партирен кăларма тугарнă.

Гришайев совхоза, Тĕп Комитет Пленумĕн постановленине сӳтсе йавма хыпăнса васкавлăн иртерни те питĕ тĕлĕнтерет. Паллăх ĕнтĕ, вăл райкомăн йăнăшĕсем çинчен пĕр сăмах та каламан, вăл пур майсемпе те, унăн ĕçне тата райкомăн ĕçне критиклекен пухура хăвăртрах иртерсе йăма тăрăшнă.

Вырăсен генилĕ сатирикĕ Салтыков—Щедрин, принципсăр, хăравçă çынсене „хуçмала чунлă", тесе йат панă. Башкирири медицинă институтĕнчи парти комитечĕн секретарĕ Вшивцев йулташ çавăн йышши çынсен йышне кĕрет пулмала. Сисĕмлĕх маскипе витĕнсе, вăл хăйĕн тăшмана йурăхла киревсĕр ĕçĕсене пытарса хăварать. Профессорсемпе студентсене политика тĕлĕшĕнчен шанмасăр тăрса, вăл кашни çын пиркиех сове хирĕçле ĕçсем тувнĕн" айăплаласа уйрăм „ĕçсем" туса хатĕрленĕ. „Политика тĕлĕшĕнчен шанчаксăр çынсен" спискине Вшивцев студентсене, профессорсене, преподавательсене 200 çынна йахăн кĕртнĕ. Çакăн пек „хуçмала чунлă" çынсем партин, чи кирлĕ интересĕсене мĕн чухлĕ сийен кĕртеççĕ!

Чи ирсĕр, чи сийенлĕ елекпе усă курса, халăх тăшманĕсем хăйсене çапса салатассинчен хăтăлса пынă, тĕрлĕ майсемпе айăпсăр тара çынсене варалнă. Çынсем çине пĕтĕмĕшпе ушканна илсе йăлана тĕп тăвас пулать. Партирен тĕрĕс мар кăларса тунă йăнăшсене тӳрлетни партин авторитетне пĕтермест, вăл пирĕн парти ретне тата тачăрах пĕтĕçтерет, ку таринччен тăрă шыв çине кăларман йрĕклĕ тата ирĕксĕр тăшмансене палăртас ĕçе парти членĕсене мобилизацилеме пулăшать.

Çынсене ывăткалама парти никама та ирĕк памасть. Ленин çынна тарăхтаракан, çынăн жалăби çине, унăн кунçулĕ çине ним шухăшсăр пăхакан бюрократсем, уйрăмăнах бюрократ-коммунистсем çине мĕнле хаярран сивлесе пăхни паллă. Сталинла Тĕп Комитет çынсем çине, вĕсен ӳсĕмĕ, çирĕплĕхĕ çине большевикла пăхмалине вĕрентет. Парти ретĕнчен кăларса, парти членĕсене хирĕç репрессилĕ мерăсем йышăнса хăйсене страхласа хăварса йăра тухма тăрăшакан карйерис-коммунистсене хирĕç татăклăн кĕрешĕве тухмала.

Большевикла сисĕмлĕх тата çынсем çине тимлĕн пăхасси—парти руководителĕне пит те кирлĕ пахалăхсем. Çак большевикла пахалăхсене хăнăхтарса пырасси парти ĕçĕнчи бюрократисăма, казеншчинăна пĕтерес тĕлĕшпе вирлĕн кĕрешсе пырассипе таччăн çыхăнса тăрать. Партирен кăларнисен апелляцийĕсене пăхса тухнă чух çеç çын çине тимлĕн пăхни кирлĕ тесе шутлани тĕрĕс мар. Активăн çĕнĕ, тĕрĕсленнĕ кадрĕсене малала кăларса пырасси, партине илесси, партилĕ ĕçе чĕртесси—пĕтĕм çак задачăсене анăçлăн татасси çакăн: парти руководителĕ çынсене тинкерсе пăхма пĕлнинчен, работниксене хак панă чухне, кашнине уйрăмăн пăхма пĕлнинчен килет.

Çынна йуратса пăхни, большевикла сисĕмлĕх—парти ĕçĕн пур сыпăкĕсенче те витĕрех паларса тăмала. Большевик-руководителĕшĕн вăл, уйрăмăн илсен, хăйне работниксен хĕсĕк ушканне хупса хумала маррине, активăн çĕнĕ кадрĕсене шыраламине, вĕсене ӳсме тата пиçĕхме пулăшмалине пĕлтерет. Парти организацийĕсен чи паллă задачĕ—партин çĕнĕ работникĕсене ура çине çирĕп тăма пулăшассинче, вĕсен сулĕ çинчен бюрократисăма сирсе пăрахассинче, вĕсене хăйсен вăйĕ çине çирĕппĕн шанакан тăвассинче, вĕсене йулташла ăшшăн тата тимлĕн пăхассинче пулать.

Парти Тĕп Комитечĕн йанварти Пленумĕн решенийĕсене хăвăрт пурнăçа кĕртесси кашни руководителе социализм тăвакан çын патне сисĕмлĕ тата тимлĕхлĕ пулса пыма хушать, большевикла сыхлăха тата ытларах вăйлатма хушать,—халăх тăшманĕсем—троцкисла-бухаринла шпионсем тата сăтрăçсем хĕсĕнсе кĕме пултарман пур çурăксем те хупă пулчăр.

Çынсене куллен воспитани парса пымалине, вĕрентмелине, йăнăшсене çитменлĕхсене вăхăтра тӳрлетме пулăшса, сисĕмлĕхе, тăшмансене сивĕч курассине, работниксен паха йенĕсене малала ӳстермелине руководителсем чăнкипе йăланса илнĕ çĕрте çеç парти пуласа çитекен пурнăçĕ çирĕплетĕнсе пек тапса тăрать. Сталин йулташ партирен, çынсене, пахчаçă хăйĕн пахчинче йуратса пăхакан йывăççине пăхнă пек, йуратса, тимлĕн пăхса ӳстерме вĕрентет. Çакăн пек туйа çынсене ăшшăн, тимлĕн тата сисĕмлĕн пăхакан пулсан, воспитани ĕçне партин кашни членĕпе те тарăннăн туса пырсан çеç май пулать. („Правда" умсталлйн).

Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн президиумĕнче

Февралĕн 2-мĕшĕнче М. И. Калинин йулташ Председател пулнипе Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕн ларувĕ пулса иртнĕ. Вăл ларура Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕпе РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пĕрле РСФСР Уголовлă-Процессуальнăй Кодексн çумне XXXIV глава хушасси çинчен постановлени йышăннă. Кунсăр пуçне, Президиум ирĕклĕ обществăсемпе союзсен уставĕсене çирĕплетессипе регистрацилес йĕрке тата вĕсем мĕнле ĕçленине сăнаса тăрас ыйтува, çавнашкаллах ытти ыйтусене те пăхса тухнă.

Мускав облăçĕн Ĕçтăвакан Комитечĕ ыйтнă тăрăх, Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн Президиумĕ Пушкинский районĕнчи Ивантейевка поçолкине Ивантейевкă хули тума йышăннă. Иватейевка—Мускав облăçĕнчи промышленнăçлă паллă пункт. Кунта 20 пин çын ытла пурăнат, вĕсенчен 12 пин çынна йахăн рабочисем. Пиравăр тĕртекен тăватă пысăк предприйати, çăкăр пĕçерекен завод, чылай культурăпа йăла учрежденисем: техникум, икĕ вăтам шкул, виçĕ клуб, больницă, ултă ача йаçли, ултă ача сачĕ, фабрикă-кухньă т. ыт. те пур. Совет бюджечĕ иртнĕ çулта 2 мĕлйун та 600 пин тенкĕ таран çитнĕ. Кăçал бюджета виçĕ мĕлйун тенкĕ ытла палăртнă. Виççĕмĕш пйатилеткăра Иватейевкăра халăх 49 пине çитиччен, рабочисен хисепĕ 20 пине çитиччен ӳсет.

Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвком Президиумĕ Инçет-Хĕвелтухăç крайĕн Ĕçтăвакан Комитечĕ тăратнă ыйтува пăхса тухса Уссури облăçĕнчи Шмаковский районĕнчи Лесозаводск йатлă рабочи поçолкине Лесозаводск хули тума йышăннă. 1932 ç. темиçе поçолкăран тунă Лесозаводскра халь 16 пин çын шутланат. Халăхран сурри ытла—рабочисем, служăщисем тата вĕсен çемйисем.

Лесозаводск хăвăрт ӳсекен промышленнăçлă центр. Унта Уссури вăрман комбинечĕ. Судоверфь, шыв тăрăх йăвăç йухтаракан кантур т. ыт. те пур. Чукунçул тăвассĕ. Хулара пурăнмали икĕ хутлă сурт 50, вăтам шкул, больницă хули. 600 çын вырнаçмалăх клуб, стадион т. ыт. те тума пройект тунă тата вĕсене тума пуçланă.

Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн Президиумĕ Калинин облăçĕнчи Каменск районĕнчи Кувшиново йатлă рабочи поçолкине Кувшиново хули тума йышăннă.

Кувшиново—чукунçул станцинче вырнаçнă. Унта 11.600 çын пурăнат. Вĕсенчен 4 пине йахăн — рабочисем. Вăл поçолкăра промышленнăç предприйатийĕсем: çырмали хутсем туса кăларакан Киров йачĕпе тăракан фабрикă (ку фабрикă Союзшăн пысăк вырăн йышăнат), хăма çуракан завод, кирпĕч тата черепицă заводĕ, типографи ĕçлеççĕ, електростанци туса çитереççĕ. Поçолкăра виçĕ шкул, ача-пăча учреждени виççĕ, клуб, стадион, больницă, 6 магазин тата фабрикă-кухньă пур. Картон тăвакан завод тата хăма çуракан заводра çĕнĕ цехсем тума палăртаççĕ.

Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн Президиумĕ Мускаври Фрунзе йачĕпе тăракан заводри ватă рабочийе **Ф. Ф. Мачуса**, Красноярск депора 40 çул ĕçлекен паровоз машинисне **А. А. Йермоленкона** тата Мускаври „Серп и молот" заводра 60 çул ĕçлекен, пысăк квалификацилĕ рабочисем нумай вĕрентсе çитĕнтернĕ рабочийе производствă отличникне **И. С. Сафонов** токăра Ĕç Геройĕ йатне панă.

Мордва АССР Тĕпĕçтăвкомĕ ыйтнă тăрăх, Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн Президиумĕ Мордва АССРеспубликĕнчи Саранск районĕн центрне Саранск хулинчен Саранск районĕнчи Посоп йалне куçарма йышăннă.

Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн Президиумĕ Иваново облăçĕнчи Савино районĕнчи Савино, Тутар республикĕнчи Арск районĕнчи Арск халăх пурнакан пунктсене, Ленинград облăçĕнчи Слуцк районĕнчи Понтоннăй поçолăка, Иваново облăçĕнчи никологор районĕнчи Никологор йалне, Мускав облăçĕнчи Верейск районĕнчи Дорхова халăх пурнакан пункта рабочи поçолкăсен категорине куçарма решенисем йышăннă.

(ТАСС).

Папанин ушкăнне куçса çӳрекен пăр çинчен илсе тухма çĕнĕрен тăвакан ĕçсем

Папанин ушкăнĕнчи тăватă паттăра пăр çинчен илсе тухасси пирки Çурçĕр çулĕсен тĕп тытăмĕнче пире çапла пĕлтерчĕç:

Февралĕн 1-мĕшĕнче „Мурманец" капитанне Папанин йулташăн ушкăнĕ вырнаçнă пăр патне кайма хушнăччĕ, çав хушува вăл илнĕ. Капитан Ульйанăв йулташ çапла пĕлтернĕ:

„Приказа пурнăçа кĕртме сайра пăрсем хушшинчи шывпа „Çурçĕр полюсĕ" станци патне кайатпăр. Координатсем: широта 72 градус та 41 минут, хĕвелтухăç долготи 4 градус та 8 минут".

Иртнĕ талăк хушинче пăр çинче лару-тăру йăвăрланнă.

Пăр уйĕсем çаплах ваклайса пынă. Пурнăçшăн тӳрех хăрушă условисем килсе тухнă пулин те, тăватă паттăр хăйулăха çухатман, калама çук паттăр ĕç тунă. Тепĕр пăр çине куçнă чухне вĕсем хăйсене вальли виçĕ уйăхлăха çитмелĕх апат-çимĕçсем илсе тухнипех чарăнман, ăслăлăх ĕçĕсен результачĕсене тата ăслăлăх ĕçне тумали хатĕрсене çăлса хăварнă.

Пăр çинчи лару-тăру çинчен февралĕн иккĕмĕшĕнче 16 сехетре йанă телеграммăра, Папанин йулташ çапла пĕлтерет:

„Станци районĕнче пăр уйĕсем 70 метртан ытла мар татăксене ваклайса пыраççĕ. Пăр çурăлса уйăрăлнисем 1—5 метр, пăр уйĕсем хушшинчи таса шыв 50 метр. Пăрсем куçса пыраççĕ. Тавракурăмри пăр 9 баллă. Самолет анса ларма йурăхлă вырăн курăнмасть. Пурçăн палаткăра, тăршшĕ 50 метр, сарлакăшĕ 30 метр пăр çинче пурăнатпăр. Çыхăну тытнă вăхăта антеннăн иккĕмĕш мачтине тепĕр пăр çине лартатпăр, пирĕнпе пĕрле апат-çимĕç виçĕ уйăхлăх, аппаратурă, результатсем. Пуринчен те салам—Папанин".

Правителствă хушнипе Çурçĕр çулĕсен тĕп тытăмĕ çак ĕçсене тунă. Шмидт йулташ „Мурманец" капитанне Ульйанов йулташа çакăн пек телеграммă панă:

„Правителствă мана Сире задани пама хушрĕ: Папанин лагерĕ патне обйазательнă çитмеле, геройсене çăлса хăвармала—вĕсене пăр çинчен илмеле. Çак историлĕ заданийе пурнăçа кĕртме пĕтĕм вăйа хурăр. Малала кайни çинчен кашни ултă сехетрен пĕлтерсе тăрăр. Шмидт".

„Таймыр" пăрçĕмĕрен февралĕн 3-мĕшĕнче тинĕсе тухма хушнă. Пăрçĕмĕрен çине тата „Ш-2" гидросамолет илнĕ. „Таймыр" пăрçĕмĕрене тумали операци начальникне А. В. Остальцев йулташа уйăрнă, вăлах експедицире Шмидт йулташăн заместителĕ.

Тăватă паттăра çăлмали операцийе „Ермак" пăрçĕмĕрен хутшăнать. „Ермак" пăрçĕмĕрене халь ремонт тăваççĕ, ăна, сывăхри ик-виç кун хушшинче ремонт туса пĕтерме хушнă. Шмидт йулташ Ленинграда кайнă, унтан вăл „Ермак" пăрçĕмĕрен çинче тинĕсе тухса кайать.

Спирин йулташăн експедицийĕ вальли „ЦКБ 30" текен икĕ самолета хатĕрлесе çитерес ĕçе васкатаççĕ.

Ку експедицине вальли кирлисене туса хатĕрлеме кайма „Мурман" йатлă пăрçĕмĕрекен парохода хăвăрт тийеме хушнă.

Папанин йулташ патне çакăн пек телеграммă йанă:

Сирĕн телеграммăна Правителствăна пĕлтернĕ. Сирĕншĕн çав тери йăвăр вăхăтра Есĕр хăйулă, большевикла тӳсĕмлĕ пулнишĕн пурте хĕпĕртеççĕ. Пурте Сирĕн пата салам йараççĕ, стихийăпа геройла кĕрешнĕ çĕрте Сирĕн паттăр коллектив çĕнтерессине шанса тăраççĕ.

Правителствă Сире хăвăрт пулăшу пама çĕнĕрен тумали чылай çĕнĕ ĕçсене çирĕплетрĕ. „Таймыр" февралĕн 3-мĕшĕнче Остальцевпа тухать. „Мурманеца" обйазательнă сирĕн пата çитме хушнă. „Ермака" хăвăрт хатĕрлеççĕ. Епĕ „Ермак" çинче тухатăп.

ШМИДТ.

(ТАСС).

Шотан зайавленийĕ

Францин премйер-министрĕ Шотан пичет представителĕсемпе калаçнă чухне çапла пĕлтернĕ: Испани хулисенчи мирлĕ халăхсем çине бомбăсем пăрахасси хăрушлăн пулса пырать тата кашни çынна тарăхтарать: Франци правителстви çав тискерлĕхсене тĕп тăвас шутпа кĕске срукрах килĕшӳ тума пур кирлĕ мерăсене те йышăнасси хăй ĕçĕ пулса тăрать, тесе шутлать.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

ЦЕНТРТИ ФРОНТ.

Испанин оборонă министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Лозойа секторĕнче (Мадридран çурçĕрele) республиканецсем Вильйавиехе çывăхĕнче Кольйадо де Еспино сăрчĕн тӳпине йышăнса, хăйсен малти линийĕсене лайăхлатнă.

Гвадалахарă фронтĕнче республиканецсен кавалери чаçĕсем разведкăла операцисене ăнăçлăн тунă, вĕсем хăйсем тăракан вырăна ним çухатусăр таврăннă. Гавас агенстви пĕлтернĕ тăрăх, Гвадалахарă провинцин çурçĕр йенче республикă артиллерийĕ, разведка тăвакан самолетсем кăтартса панипе усă курса, пăлхавçăсен укреплениийĕсемпе тылĕсем çине хыттăн персе тăрать, пăлхавçăсене пысăк çухатусем кӳрет.

Центрти фронтăн пĕр участкинче кĕтмен çĕртен атакă туса, республиканецсем фашисла командованин приказне йарса илнĕ. Приказра полицийе çартан таракан кашни салтакăнчех çемйери çынсене—ашшĕне, амăшне, пиччĕшĕсене тата аппăшĕсене арĕслеме хушса çырнă.

ХĔВЕЛТУХĂÇРИ (АРАГОНИРИ) ФРОНТ.

Республикă артиллерийĕ пăлхавçăсен тылĕсем çине пенине пула, Альмудебарте (Уескăран кăнтăрпа хĕвелтухăçнеле) çар хатĕрĕсен пысăк склачĕ çунса кайнă.

Кăнтăрти фронтра улшăнусем çук.

(ТАСС).

Испани кортесĕсен ларувĕ

Барселонăран пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн пĕрремĕшĕнче кортессен (Испани республикĕн парламенчĕн) ларувĕ пулса иртнĕ.

Ларува халăх фрончĕн депутачĕсем нумай пынă, çавăн пекех тата центр депутачĕсем, ĕлĕкрех Испанин министрсем пулнисенчен хăшпĕрисем тата йутçĕршывсен хăнисем те пынă.

Лару залне республика правителствин членĕсем пырса кĕрсен, кортессен депутачĕсем вĕсене тăвăллă оваци тунипе кĕтсе илнĕ. Республикăлă Испани правителствин пуçлăхĕ Негрин хăйĕн сăмахĕнче вăрçă республикă çĕнтернипе çеç тата нимĕнле компромиссем тумасăрах пĕтме пултарать тесе паллă туса каланă. Негрин пăлхавçăсен маневрисене, республикă тылĕн çирĕплĕхне хавшатас тĕллевпе çывăх вăхăтра пăлхавçăсемпе мир тумала текен шухăшсем сарма хăтланакансене тăрă шыв çине кăларнă. Республикăлă Испани правителстви,—тенĕ Негрин,—çĕршывăн наци тата економикă тĕлĕшĕнчен никама пăхăнса тăманлăхне сийен кӳмеле тăвас шутпа пĕр утăм та тумĕ.

Испанири коммунисла парти йачĕпе кортессен ларувĕнче Долорес Ибаррури сăмах тухса каланă. Вăл правителствăн пăлхавçăсемпе нимĕнле компромиссем те тума килĕшмен çирĕп позицине саламланă. Вăл: вăрçă пăлхавçăсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕнтернипе çеç пĕтме пултарать,—тесе паллă тунă.

Хăйсем йышăннă резолюцире кортессен депутачĕсем пурте пĕр шухăшлăн халăх фрончĕн правителствине шаннине кăтартнă.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

ВĂТАМ КИТАЙРА

ХАНЬКОУ, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Таньцзинь—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участкинче Йапони çарĕсем йулашкийерне хушшинче темиçе хутчен те Цихе йатлă йуханшыв (Мингуан сывăхнерех) урлă каçма хăтланнă, анчах та вĕсен ĕçĕ ăнăçман. Йапони позицийĕсене артиллерирен персе тата бомбăсем пăрахса тĕппипех çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, Китай çарĕсем Çаоцихе йатлă йуханшыв патĕнчен урăх вырăна куçнă. Линьхуайгуань патĕнче Китай чаçĕсем оборонă хӳтлĕхĕсем туса çирĕплетсе лартнă. Йанварĕн 28-мĕшĕнче çав вырăнта Йапонин пĕр самолетне персе антарнă. Самолечĕ Йапони çарĕсем тăнă çĕрех ӳкнĕ.

Аньхуай провинцинчи фронтра тата Чжецзйанра улшăнусем çук.

Центрти фронтра йапонецсем, Аслă-канал тăрăхĕпе выртакан Хуайань—Нанкин хушшинчи шоссене çавăрса илес майпа, çĕнĕ операцисем тунă. Йапони çарĕсем çав операцисене Китайăн çав султе асăннă шоссе çулĕнчен хĕвелтухăçнерех тăракан Китай чаçĕсене çавăрса илсе, ытти чаçĕсенчен татса илес тĕллевпе тунă. Шоссе çулĕ таврашне йапонецсем пысăк соединенисем илсе пынă. Китай чаçĕсем, йапонецсене малала куçса пырассине тытса чарас шутпа, шоссен кăнтăр участкине çĕмĕрнĕ тата Узйачжень йатлă поçолăка (шоссе çулĕн чи çурçĕрти пункчĕ, Хуайань тĕлĕнче) шыва путарнă.

Йапони авиацийĕ чукунçул çинчи питех кирлĕ пункт çине—Суйчжоу çине халь те бомбăсем пăрахма чарăнмасть. Йанварĕн 31-мĕшĕнче Йапони пилĕк самолечĕ Суйчжоу çине 7 бомбă пăрахнă, чылай суртсем ишĕлсе аннă. Йанвар уйăхĕнче йапонецсем Суйчжоу çине çирĕм хутчен пырса бомбăсем пăрахнă.

Йанварĕн 31-мĕшĕнче Йапони самолечĕсем Кантон таврали чукунçул çине çичĕ хутчен пырса бомбăсем пăрахнă.

ШАНХАЙ, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Йанварĕн 31-мĕшĕнче йапонецсем Уху патĕнчи сылтăм флангра атакă тунă, анчах та китайецсем вĕсен атакине сирсе пăрахнă. Уху—Ханьчжоу линийĕнче Китай çарĕсем ăнăçлăн контрнаступлени туса пыраççĕ. Çав май йапонецсем кунта çĕнĕ вăйсем илсе пыраççĕ. Нанкин—Ханьчжоу шоссе çулĕ çинче тытăнса тăрас тесе, йапонецсем Чансиппа Хучжоу хушшинчи пунктсенче хăйсем тăракан вырăна çирĕплетеççĕ. „Хуамейжнабо" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Уху—Ханьчжоу линийĕ тавралĕнче Йапони çарĕсен хисепĕ 30.000 салтакран иртет. Вĕсен 80 самолет, çĕр ытла танк, пилĕк çĕре йахăн орудисем. Китайран илнĕ сведенисем тăрăх, пĕр Ханьчжоу районĕнче кăна Йапони салтакĕсем 8.000 çын шутланаççĕ.

ÇУРÇĔР КИТАЙРА

ХАНЬКОУ, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Таньцзинь—Пукоу чукунçулĕн çурçĕр участкинчи лару-тăру çинчен сведенисем çук. Çав чукунçул таврийчи Шаньдун фронтĕнче центрти сектора лăпкă тăни китайецсемпе йапонецсем хальхи вăхăтра хăйсен çарĕсене пĕр çĕрелe пухса пынинчен килет пулмала, теççĕ. Кунта пысăк çапăçусем пуçланасса кĕтеççĕ.

Женевăра Китай делегацийĕ панă зайавлени

ЖЕНЕВА, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Китайăн Женеври делегацийĕ ĕнер пичет представителĕсене заявлени панă. Вăл заявленире: Лигă нацийĕн „Йапонин Китайра агрессийĕ пирки витĕмлĕрех ĕçсем туса иртерме" ыйтса, Китай правителстви логикă йенчен те тата Лигă наци уставĕне килĕшӳлĕн, пĕтĕмпех саккунлă тӳрĕ,—тесе кăтартса панă. Пичетре çакăн пек „сасхура саралнă: Китай делегацийĕ имĕш „Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене интервенци тутарас тĕллевпе", йе тата „Франципе Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене вăрçа сĕтĕрсе кĕртес" тĕллевпе маневăрсем тăват, тенĕ. Делегаци çак сасхурана сирсе йарат. Китай ыйтувĕ тăрăх ĕçлекен тăватă державă канашлувĕнче Китай делегацийĕ Женевăри калаçусем мĕнле пыни çинчен Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен правителствине паллаштарас сĕнӳпе килĕшнĕ.

Америкăн никама пăхăнмасăр шухăшлас тата параллельнă ĕçлес политикне пурте пĕлеççĕ, тесе кăтартса парат Китай делегацийĕ. Çавăнпа та „Америкă правителствине хăйĕн ĕçĕсене Лигă нацине килĕшсе туса пыма хушас тĕллевпе пĕр-пĕр делегаци йе делегацисен ушкăнĕ маневăрсем тăват" тесе калакан сасхура никĕсĕ ĕненме никĕсĕ сăлтав та çук.

Лигă наци кулуарĕсенче çак заявлени пĕрремĕшĕнче, мĕн пур буржуала çырнывсен пичечĕ çинче сĕмĕрленсе американецсене „совет интригисем" çинчен калакан йумахĕсене „хăратма" хăтланакан фашисла елементсене хыткăн çапнă пулать тата иккĕмĕшĕнчен Женевăра Британипе Франци тавраннĕнче ăнлантарма хăтланнă пек резолюцин пĕр-пĕр формулировкине çеç мар, чăн-чăнах „витĕмлĕ ĕçсем" çинчен сӳтсе-йавна тесе калакан чăнлăха тепĕр хут çирĕплетет,—тесе паллă тăваççĕ.

Йапони çарĕсене реорганизацилени

ХАНЬКОУ, февралĕн 2-мĕш. (ТАСС). Китайран пĕлтернĕ тăрăх, Йапони штабĕ, çапăçусем начар иртнĕ пирки, Çурçĕр Китайра Терауци генерал йертсе пынипе çапăçакан Йапони çарĕсенчен виçĕ çар тума йышăннă: пĕрремĕш çарĕ Косада пуçпулса йертсе пынипе Шаньси, Суйуань тата Шеньси провинцисенче çапăçать. Иккĕмĕш çарĕ Хацуки пуçпулса йертсе пынипе Хенань провинцинче Бейпин—Ханькоу чукунçул тăрăхĕнче çапăçать. Виççĕмĕш çарĕ Игагоки пуçпулса йертсе пынипе Суйчжоу районĕнче Таньцзин—Пукоу чукунçулĕ çинче çапăçать. Лацуи генерал малтанхи пекех Вăтам Китайри Йапони çарĕсен командуйушчийĕнчех йулать.

1938 ÇУЛХИ ЙАЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕН ГОСУДАРСТВĂ ПЛАНĔ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн 1938 çулти йанварĕн 27-мĕшĕнче „1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен государствă планĕ çинчен" йышăннă постановлени тăрăх, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат:

1. Йалхуçалăхĕнчи тĕп ĕçсен планне пĕтĕм-çулталăклăха, çуркуннехипе кĕркуннехи ĕçсене кĕртсе, 1-мĕш хушса сырнинче кăтартнă пек тăвас, вăл шутран:

а) çураки планĕ — 419,4 пин гектар акмала; вăл шутран: совхозсенче 3,2 пин гектар, колхозсенче 346,0 пин гектар, йединоличниксен хуçалăхĕсенче 43,0 пин гектар, (2, 3, 4, 5-мĕш хушса çырнисенче кăтартнă пек);

б) таса çĕртме тумали план — 142,7 пин гектар, вăл шутран: совхозсенче 0,7 пин гектар тата колхозсенче 142,0 пин гектар;

в) тĕштырăсене кĕркунне акса хăвармали план — 218,7 пин гектар, вăл шутран: совхозсенче 0,7 пин гектар, колхозсенче 201,0 пин гектар тата йединоличниксен хуçалăхĕсенче 17,0 пин гектар;

г) кĕрхи çĕртме тумали план—283,0 пин гектар, вăл шутран: совхозсенче 3,0 пин гектар тата колхозсенче 280,0 пин гектар;

д) колхозсенче клевер вăрлăхĕ тума акмали план—3 пин гектар тата улăх куракĕсен вăрлăхĕ—0,5 пин гектар. Çав вырăнсене суйласа лайăх тасатнă, пуринчен малтан—вырăнти лайăх суртлă вăрлăхсене çемçетнĕ, çумкуракĕсенчен таса вырăнсене акмала; совхозсемпе колхозсенче нумай çул ÿсекен куракĕсене вăрлăхлăх 13,3 пин гектар хăвармала, вăл шутран: совхозсенче 0,1 пин гектар тата колхозсенче 13,2 пин гектар (6-мĕш хушса çырнинче кăтартнă пек).

2. Çĕрĕç халăх комиссариатне тата райĕçтăвкомсене кашни колхозăн конкретлă уйрăмлăхĕсене, пурнăçа кĕртнĕ йе хаљ пурнăçа кĕртме палăртнă пусуçавăрнăнисене шута илсе, кашни райăна кăтартса панă çак план тăрăх, йалхуçалăх ĕçĕсен планне 1938 çулти февралĕн 15-мĕшĕнчен кайа йулмасăр кашни колхоза çитерме, çавăн пекех тата 1938 çулти февралĕн 15-мĕшĕнчен кайа йулмасăр йалхуçалăх ĕçĕсем йенĕпе йединоличниксен хуçалăхĕсене заданисем парса çитерме хушас.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ—„ĕççыннисен пит пысăк массисен интересĕсене таччăнах пырса тивекен çакăн пек пит паха ĕçсене тунă чухне,—плана колхозсене çитерсе парасси çавăн пек ĕç пулса тăрат, — ниме пăхмасăр администрацилени, колхозниксен сĕнĕвĕсемпе кăтартăвĕсене тата ыйтăвĕсене шута илменни ан пултăр. Райĕçтăвком президиумĕсен ларăвĕсенче плансене çирĕплетнĕ чухне колхозсен председателĕсем, вĕсен планĕсене çирĕплетнĕ чух обйазательнă пулмала", — тесе кăтартса пани çине райĕçтăвкомсемпе çĕрĕç оргăнĕсене уйрăмăнах çавăрăнса пăхтарас.

3. Райĕçтăвкомсемпе çĕрĕç оргăнĕсен ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ колхозсемпе йединоличник хуçалăхĕсене государствăна обйазательнă тырă тăратмали план йĕрки çинчен, çавăн пекех тата 1938 çулта çĕнĕ çĕр çĕтсе акакан колхозсене обйазательнă йĕркепе государствăна тырă тăратас ĕçре љготăсем парасси çинчен йышăннă постановлени çинчен колхозниксемпе йединоличниксен хуçалăхĕсене анлăн ăнлантарса памала.

4. Тырпул тухăçне ÿстерессишĕн кĕрешесси—1938 çулхи пĕтĕм йалхуçалăх ĕçĕсенче тĕп задачă пулса тăрат. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ райĕçтăвкомсене çав задачăна пурнăçа кĕртесси çине йалсоветсем, çĕрĕç оргăнĕсем, МТС-сем, колхозсен тата совхозсен руководителĕсем, колхоз активĕ, колхозниксемпе колхозницăсен пĕтĕм масси, совхозсенчи рабочисемпе работницăсем çавăрăнса пăхмала туса йĕркелеме хушат.

5. Чылай районсем тата колхозсем çуракине хатĕрленес ĕçре, уйрăмăнах вăрлăх тасатас ĕçре, çавăн пекех тата суртлă вăрлăх улăштарас ĕçре йулса пынине Халăх Комиссарĕсен Совечĕ малашне чăтма çук тесе шутлат, Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райĕçтăвкомсене, райçĕрĕçпайĕсене, МТС-сене тата колхоз руководителĕсене Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ 1938 çулти йанварĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановленийе ним пăрăнса тăмасăр пурнăçа кĕртме хушат.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **Л. СПАСОВ.**

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ **Н. ЖУКОВ.**

Хушса çырни 1-мĕш №

1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен государствă планĕ (гектарпа)

Районсем	Çуракинче акмали, иртнĕ çулсенче акнă куракăсемсĕр: Колхозсенче	Йединоличниксен хуçалăхĕсенче	Таса çĕртме сухи (колхозсенче)	Тĕштырăсене кĕркунне акмала: Колхозсенче	Йединоличниксен хуçалăхĕсенче	Кĕрхи çĕртме сухи (колхозсенче)
Улатăр	11040	500	4120	5550	250	9000
Елĕк	17820	1550	8180	10870	700	14000
Патăрйел	15565	2800	6150	9250	1120	13000
Вăрнар	17480	2350	6600	10500	920	14000
Йĕпреç	11090	4400	4900	7300	1900	10000
Ишлей	14605	1330	6240	8940	450	11500
Канаш	10425	3640	4010	5600	1350	8400
Куславкка	13760	600	5650	9300	320	10000
Хĕрлĕ Чутай	11560	1940	5100	7700	650	10000
Кувакинă	12330	640	6150	7150	220	11000
Сĕнтĕрвăрри	13395	1920	5180	7500	680	11000
Пăрачкав	15300	1450	7100	8400	700	13000
Турхан	7235	3100	2760	4450	1200	6500
Тутаркас	17320	1400	6610	9380	540	14500
Трак	15080	980	5900	8800	340	13000
Вăрмар	19260	2800	7110	10560	1120	15000
Çĕрпÿ	20955	640	8050	11220	320	15000
Шупашкар	13060	740	5200	8100	320	11500
Шăмăршă	8750	1400	3250	4450	520	7000
Шăхасан	15050	1900	6900	9700	750	12000
Шăнкартам	8115	1560	3565	4665	600	5600
Çĕмĕрле	8770	1300	3395	4585	470	6000
Йетĕрне	16610	900	6000	8600	340	14000
Йелчĕк	18240	1350	9430	11230	500	14200
Тăвай	13085	1800	4450	7200	720	10800
Пурĕ ЧАССР тăрăх	346000	43000	142000	201000	17000	280000

Хушса çырни 2-мĕш №

1938 çулта çурхи тырăсене акмали план (гектарпа)

КУЉТУРĂСЕН ЙАЧĔСЕМ	Пĕтĕмпе	Вăл шутран: Колхозсенче	Йединоличниксен хуçалăхĕсенче
Çуртыррисен лаптăкĕ (иртнĕ çулсенче акнисен лаптăкĕпе пĕрле)	493200	423000	43000
Çуртыррисене акмали план (иртнĕ çулсенче акнă лаптăксăр)	416200	346000	43000
I. Çурхи тырăсем:	295600	260600	35000
Вăл шутран:			
Тулă	60000	59000	1000
Урпа	8000	8000	—
Сĕлĕ	154000	131000	23000
Вир	7000	4500	2500
Хура тулă	5000	3500	1500
Пăрçалă куљтурăсем	46000	41000	5000
Викă вăрлăхлăх	12000	11000	1000
Пăри	3000	2000	1000
Љупин вăрлăхлăх	600	600	—
II. Техникăла куљтурăсем	11400	10000	400
Вăл шутран:			
Йĕтĕн долгунец	3000	3000	—
Кантăр сÿс тума	6400	5000	400
Махоркă	2000	2000	—
III. Пахча-çимĕçсем	59000	26600	7400
Вăл шутран:			
Çĕрулми	54500	24600	6800
Ытти çимĕçсем	4500	2000	600
IV. Выљăх апачĕ валљи (иртнĕ çулсенче акнă куракăсемсĕр)	50200	48800	200
Вăл шутран:			
Куракăсем пурĕ	43000	43000	—
В. ш. Пĕр çул ÿсекеннисем	42500	42500	—
Нумай çул ÿсекеннисем	500	500	—
Çилослăх акмалисем	3000	3000	—
Тымар-çимĕçсем	4200	2800	200
Кусемсĕр пуçне иртнĕ çулсенче акнă куракăсене çумлан лаптăк	77000	77000	—
Ытти тырăсем çине акнисем	57000	57000	—

Хушса çырни 3-мĕш №.

Колхозсенче 1938 çулта çурхи тĕштырăсене акмали план (гектарпа)

РАЙОНСЕМ	Çурхи тĕштырăсем	ВĂЛ ШУТРАН: Тулă	Урпа	Сĕлĕ	Вир	Хура тулă	Пăрçалă тырăсем	Викă	Љупин вăрлăхлăх	Пăри
Улатăр	8290	1650	—	4185	875	110	1080	350	40	—
Елĕк	13110	2450	150	7970	—	50	1800	450	40	200
Патăрйел	12135	3050	70	5995	200	210	1910	460	50	290
Вăрнар	12650	3000	450	6195	60	250	1920	600	100	75
Йĕпреç	8100	2250	—	3410	180	250	1560	340	30	80
Ишлей	11085	2100	500	6263	—	80	1560	460	40	80
Канаш	8260	2100	200	4015	—	80	1375	350	40	100
Куславкка	10460	2250	1100	3995	—	60	2365	580	30	80
Хĕрлĕ-Чутай	8415	1700	50	4516	300	50	1400	400	—	—
Кувакинă	9720	2500	—	4120	900	190	1620	390	—	—
Сĕнтĕрвăрри	9185	2750	600	4000	—	120	1265	400	—	50
Пăрачкав	11810	2300	—	5840	1000	800	1420	410	50	—
Турхан	5480	1300	—	2560	150	120	1050	250	—	50
Тутаркас	13280	2200	1000	7125	—	—	2100	680	—	175
Трак	11270	2500	500	5670	—	—	1900	500	50	150
Вăрмар	14660	2800	930	7260	—	130	2860	530	—	150
Çĕрпÿ	15845	3700	300	8785	—	100	2220	560	80	50
Шупашкар	9530	2600	1000	4075	—	—	1255	500	—	100
Шăмăршă	6870	1500	—	3365	125	200	1300	300	—	80
Шăхасан	11980	2700	450	5790	—	160	2100	600	50	130
Шăнкăртам	6410	1800	—	3120	50	200	870	300	20	50
Çĕмĕрле	6595	1100	100	3885	210	60	950	300	—	—
Йетĕрне	10505	2100	200	6205	200	70	1220	450	—	60
Йелчĕк	14555	4500	—	7455	250	70	1780	450	—	50
Тăвай	10400	2100	400	5200	—	150	2020	400	30	100
Пурĕ пĕрле	260600	59000	8000	131000	4500	3500	41000	11000	600	2000

Хушса çырни 4-мĕш №

Колхозсенче 1938 çулта техникăла куљтурăсем акмали план (гектарпа).

РАЙОНСЕМ	Техникăла куљтурăсем	Вăл шутран: Йĕтĕн долгунец	Кантăр	Махоркă
Улатăр	650	350	—	300
Елĕк	700	—	700	—
Патăрйел	310	—	310	—
Вăрнар	790	250	240	300
Йĕпреç	630	225	130	275
Ишлей	230	—	230	—
Канаш	160	—	160	—
Куславкка	90	—	90	—
Хĕрлĕ Чутай	570	260	260	50
Кувакинă	900	450	—	450
Сĕнтĕрвăрри	80	—	80	—
Пăрачкав	1050	550	—	500
Турхан	330	210	120	—
Тутаркас	350	—	350	—
Трак	390	—	340	50
Вăрмар	230	—	230	—
Çĕрпÿ	260	—	260	—
Шупашкар	120	—	120	—
Шăмăршă	70	—	70	—
Шăхасан	240	—	240	—
Шăнкăртам	85	25	60	—
Çĕмĕрле	605	430	100	75
Йетĕрне	640	250	390	—
Йелчĕк	300	—	300	—
Тăвай	220	—	220	—
Пурĕ ЧАССР тăрăх	10.000	3.000	5.000	2.000

Хушса çырни 5-мĕш №.

1938 çулта колхозсенче пахча-çимĕçсем тата выљăх апачĕ тумали куљтурăсем акмали план (гектарпа)

Районсем	Пĕтĕмпе пахча-çимĕç лаптăкĕ	Вăл шутран çĕрулми	Выљăх апачĕ тумали куљтурăсем (куракăсемсĕр)	Вăл шутран: Пĕр çул ÿсекен куракăсем	Нумай çул ÿсекенисем (урăх тырă айĕнче маррисем)	Тымарçимĕçсем	Çилос тумалисем	Вĕсемсĕр пуçне иртнĕ çулсенче акнă куракăсен çумлали лаптăкĕ	Вĕсемсĕр пуçне ытти тырăсем айне акнă куракăсем	Вăл шутран: Клевĕр	Љуцернă
Улатăр	780	700	1320	1100	—	100	120	1880	1300	1300	—
Елĕк	1310	1240	2700	2430	—	150	120	4700	3000	3000	—
Патăрйел	810	760	2310	2100	—	90	120	2655	2500	1300	600
Вăрнар	1450	1370	2590	2300	—	140	150	5310	3200	3200	—
Йĕпреç	980	900	1380	1100	—	130	150	2670	2300	2300	—
Ишлей	1120	1000	2170	1930	—	120	120	3000	2600	2600	—
Канаш	595	475	1410	1200	—	110	100	2685	2000	2000	—
Куславкка	1250	1130	1960	1750	—	100	110	4220	2600	2500	100
Хĕрлĕ Чутай	765	700	1810	1600	—	100	110	2830	2000	2000	—
Кувакинă	480	440	1230	1000	—	90	140	1730	1800	1800	—
Сĕнтĕрвăрри	2110	2030	2020	1800	—	110	110	3005	2500	2500	—
Пăрачкав	890	850	1350	1300	—	100	150	2390	2000	2000	—
Турхан	440	400	985	800	—	90	95	1685	1200	1200	—
Тутаркас	1040	950	2650	2200	—	250	200	4900	3000	3000	—
Трак	1380	1310	2040	1800	—	100	140	3540	2700	2600	100
Вăрмар	1390	1300	3080	2800	—	130	150	4840	3400	3200	200
Çĕрпÿ	1650	1560	3200	2400	500	150	150	3345	3000	3000	—
Шупашкар	1280	1100	2130	1900	—	100	130	2610	2100	2100	—
Шăмăршă	470	430	1340	1200	—	60	80	1210	1100	860	240
Шăхасан	900	780	1930	1700	—	120	110	3100	2500	2250	250
Шăнкăртам	370	330	1250	1100	—	70	80	1505	1000	1000	—
Çĕмĕрле	570	500	1000	840	—	80	80	2050	1000	1600	—
Йетĕрне	2700	2610	2765	2600	—	65	100	3500	2500	2500	—
Йелчĕк	1310	1245	2075	1800	—	170	105	3920	2900	2490	410
Тăвай	560	500	1905	1750	—	75	80	3720	2200	2100	100
Пурĕ ЧАССР-пе	26600	24600	48800	42500	500	2800	3000	77000	57000	55000	2000

Вĕренÿре 10-мĕш клас малта пырат

ЕЛĔК. Вĕренÿ çулĕ пуçланнă кунах Йуçкассинчи вăтам шкулти пур классем те социалисăмла ăмăртăва хутшăнначчĕ. Ăмăрту договăрĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн, вĕренÿре 10-мĕш клас малта пыни, 7-мĕш клас йулса пыни палăрчĕ. 10-мĕш класри кашни ачах догăвăрта кăтартнă пур пунктсене те пурнăçланă. Ачасем 100 процентпех шкула çÿренĕ, вĕренÿ пахалăхĕ çÿлĕ вырăнта тăрат, дисциплинă та аван. 7-мĕш класра вĕренекенсем хушшинче дисциплинă йапăх. Вĕренÿре йулса пыракансен шучĕ пысăк, хăшпĕр ачасем шкула кун сиктерсе çÿренĕ.

Шкул çумĕнчи комсомол организацийенче 22 комсомолец. Вĕсем пурте вĕренÿре ытти ачасене пример кăтартаççĕ. Кашни комсомолецах хаçат-журналсем çырăнса илет. Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне кашнийех 3-шер оборонă значокĕнчен кайа мар илессишĕн кĕрешеççĕ. Шкулта Ворошилов пек тĕл пеме вĕренмели кружок, драмкружок, парти историне вĕренмели кружоксем аван, йĕркелĕ ĕçлесе пыраççĕ. Ачасем кану вăхăтне савăнăçлă ирттереççĕ. Шкул радио лартрĕ, патефон, гармоњ, шашкă-шахмăт, биллиард ытти вăйă хатĕрĕсене те илнĕ. Кунсăр пуçне шкулăн 30-мăшăр йĕлтĕр пур. Шкул библиотекинчи кĕнекесен шучĕ те чылайах ÿсрĕ.

Йевграфов.

Хушса çырни 6-мĕш №

Колхозсенче клеверпа улăх куракĕсен вăрлăхне тума акмали тата вăрлăх тума 1938 çулта хăвармали план

РАЙОНСЕМ	Вăрлăх тума акмала: Клевĕр	Улăх куракĕсем	Вăрлăх тума вырăн хăвармала: Пĕтĕмпе	Вăл шутран: Клевĕр	Љуцернă	Улăх куракĕсем
Улатăр	50	—	350	350	—	—
Елĕк	150	—	700	700	—	—
Патăрйел	50	—	500	250	250	—
Вăрнар	200	—	800	800	—	—
Йĕпреç	100	—	500	500	—	—
Ишлей	100	—	400	400	—	—
Канаш	100	—	500	500	—	—
Куславкка	100	—	600	600	—	—
Хĕрлĕ-Чутай	250	—	500	500	—	—
Кувакинă	—	—	400	400	—	—
Сĕнтĕрвăрри	100	—	600	600	—	—
Пăрачкав	250	—	400	400	—	—
Турхан	—	—	300	300	—	—
Тутаркас	800	—	700	700	—	—
Трак	50	—	510	500	10	—
Вăрмар	200	—	700	700	—	—
Çĕрпÿ	—	500	1050	450	—	600
Шупашкар	200	—	400	400	—	—
Шăмăршă	—	—	250	200	50	—
Шăхасан	150	—	600	600	—	—
Шăнкăртам	—	—	380	350	30	—
Çĕмĕрле	200	—	400	400	—	—
Йетĕрне	150	—	500	500	—	—
Йелчĕк	—	—	550	300	250	—
Тăвай	300	—	610	600	10	—
Шупашкар хули	—	—	—	—	—	—
Пурĕ ЧАССР тăрăх	3000	500	13200	12000	600	600

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Чăваш АСС Республикĕнчи колхозсенче вăрлăх фончĕ хывас тата суртласа тасатас ĕçсем 1938 çулти февралĕн 1-мĕшне мĕнле пулса пынине кăтартакан СВОДКИ.

РАЙОНСЕМ	тĕштырăсен вăрлăх фондне хывни: План	Плана пурнăçлани (процентпа)	суртлă вăрлăхсен фондне хывни: План	План пурнăçлани (процентпа)	суртлă вăрлăхсене улăштарни: План	Плана пурнăçлани (процентпа)	тонйерпа суртласа тасатни: План	Плана пурнăçлани (процентпа)
Улатăр	12014	110,2	11834	67,1	1750	86,4	10299	76,2
Елĕк	23065	108,4	22527	97,8	4200	89,5	20341	68,9
Патăрйел	20179	106,9	19783	98,9	6468	16,2	17062	24,4
Вăрнар	21980	124,6	21470	91,2	4976	68,3	18868	105,8
Йĕпреç	13809	106,0	13418	96,8	4446	62,0	11277	70,0
Ишлей	18762	127,6	18278	101,8	5440	19,5	16266	56,8
Канаш	16324	99,1	16096	85,8	3800	7,5	14124	21,5
Куславкка	18234	101,8	18080	88,2	5220	83,0	15194	101,6
Кувакинă	14578	108,8	14462	103,4	6761	2,8	12262	107,6
Хĕрлĕ Чутай	15138	98,8	15078	97,1	4769	7,5	12903	63,4
Сĕнтĕрвăрри	15374	109,2	15210	90,5	3866	46,6	13420	57,3
Пăрачкав	18130	102,6	16990	80,1	7008	5,7	14716	45,3
Турхан	9736	97,5	9496	68,5	1686	45,1	7880	36,4
Тутаркас	22924	109,3	22780	92,6	5615	18,9	20660	41,8
Трак	19706	99,5	19472	98,0	4712	53,2	17027	87,4
Вăрмар	24415	103,9	24042	78,5	4038	47,6	20086	44,7
Çĕрпÿ	23532	106,6	23294	108,2	7817	58,6	20360	54,9
Шупашкар	16583	112,7	16211	78,2	4500	90,4	14863	19,7
Шăмăршă	11153	107,8	10853	58,6	1093	8,1	8965	27,7
Шăхасан	21412	104,2	21116	98,3	3944	66,4	18540	44,2
Шăнкăртам	10786	127,0	10474	86,1	2690	129,8	9073	58,5
Çĕмĕрле	10624	122,3	10480	54,3	1255	155,0	9156	64,2
Йетĕрне	17910	119,9	17682	113,5	5059	41,6	15950	71,7
Йелчĕк	24551	104,8	24263	102,5	4147	201,8	21788	40,2
Тăвай	16759	110,6	16405	96,7	6990	13,3	13820	72,6
Пурĕ ЧАССР тăрăх	437680	108,9	429910	91,4	111350	49,2	374900	60,9

Терентйев бригади вăйлă тырпулшăн кĕрешет

ВĂРНАР. „Çĕнйал" колхозри 3-мĕш бригадăна комсомолец Терентйев Иван йĕртсе пырат. Вăл 4-мĕш çул ĕнтĕ бригадир пулса ĕçлет. Бригадир пуличчен районри колхоз шкулĕнче вĕреннĕ.

Терентйев бригади иртнĕ çулти йалхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ. Колхозăн вăтам шутпа гектартан 17 центнер ыраш тухнă пулсан, Терентйев бригадинче 19 центнер тухнă, кашни гектартан 33 центнер урпа туса илнĕ.

Терентйев бригадинче пурĕ 3 комсомолец. Вĕсем пурте колхоз производствинче паха тĕслĕхсем кăтартакан комсомолецсем. Акă вĕсен ĕçĕсем:

Иванов Василий—вăл рйадовой колхозник. Çуракинче суха ĕçĕнче ĕçленĕ, ĕç нормине 150—180 процент тултарса пынă. Тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра та стахановла ĕçленĕ, кашни кунах ĕç нормине 130—140 процент тултарнă.

Иванов комсомолец массă умĕнче авторитетлă. Вăл колхозри агитатор. Ăна колхозниксем йуратаççĕ, унăн сăмахĕсене йаланах итлеççĕ.

„Суйлав Положенине" тата Сталинла Конституцине кружокра тăрăшса вĕрентнĕ, кружок урлă 131 çын вĕрентсе кăларнă. Халĕ вăл колхозниксем хушшинче çуракине хатĕрленесси, кăçал вăйлă тырпул туса илесси çинчен тата РСФСР-ĕн Конституцийĕ çинчен колхозниксем хушшинче агитаципе пропагандă ĕçне анлăн сарса пырат.

Çавăн пекех Беляйев Алексей, Терентйев Аверки комсомолецсем те çуракине хатĕрленес ĕçре активлă хутшăнса ĕçлеççĕ.

Терентйев йулташ бригади кăçалхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме иртнĕ çулхи декабĕр уйăхĕнче тытăннă. Колхозниксене вăйлă тырпул кĕрешĕвне анлăн йавăçтарнă. Бригадăн çĕре çемĕçтермели вырăнти йапаласене хатĕрлемели план пур. Мĕн пур ĕçе план тăрăх туса пыраççĕ.

Ĕçе çакăн пек организациленипе Терентйев бригади çак тарана çитсе уйа 500 лав тислĕк, 1200 лав торф кăларнă. Кунсăр пуçне 8 центнер кĕл, 5 центнер чăх-чĕп тислĕкĕ пухса хунă.

Йалхуçалăх машинисене йусанă, лаша хатĕрĕсем хатĕрленĕ. Çак кунсенчех вăрлăхсене суртласа пĕтереççĕ.

Алек. Пољаков.

Тивĕçлĕ выводсем тăваççĕ

Партин Шăнкăртам районĕнчи пуçламĕш организацисенче пухусем пулса иртрĕç. Пухусенче ПСК(б)П Тĕпком Пленумĕн решенине сÿтсе-йаврĕç. Тухса калаçакансем нумай пулчĕç. Вĕсем пуçламĕш организацисем тунă йăнăшсене кăтартса, малала вăл йăнăшсене тÿрлетесси çинчен каларĕç.

Райĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш организаци парти членĕсемпе кандидатсене партирен кăларасси çине питĕ те çиеелтен пăхнă. Çавăнпа та ĕнтĕ 1937 ç. нойабĕр уйăхĕнчен пуçласа икĕ уйăх хушшинче пурĕ 5 коммуниста партирен кăларнă. Мĕнле айăпсемпе партирен кăларма йышăннă пуçламĕш организаци? Акă илер-ха Избетов йулташа. Ăна тимлĕхе çухатса троцкиссемпе пĕрле çÿренĕ тесе айăпласçĕ. Ăна çапла айăплани тĕрĕс пулман. Мĕншĕн тесен, Избетов йулташ хăй троцкиссене тăрăшыв çине кăларма пулăшнă. Избетов çинчен суйа материалсем панă. Пуçламĕш организаци çакна тĕрĕслемесĕрех Избетов йулташа партирен кăларат. Кун пеккисем татах та пур, сăмахран—Муллинова.

Шăнкăртам йалсовечĕ çумĕнчи пуçламĕш организаци Батуллин йулташа троцкист семйисемпе çыхăну тытнă тесе партирен кăларнă. Тĕрĕсленĕ хыççăн, Батуллин командировкăра пулнă вăхăтра Абљазова Батуллин хватерне кĕрсе тухни палăрнă. Парти райкомĕ Батуллина парти ретĕнчех хăварчĕ.

Пуçламĕш организацисенче çакăн пек йăнăшсем чылай пулнă. Йăнăшсем çинчен коммуниссем пухусенче тухса каларĕç.—Пленум решенине куллен ĕçре тимлĕн пурнăçласа пымала,—теççĕ коммуниссем.

Пухусем питĕ активлăн иртсе пычĕç.

А. Кужиков.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн 20 çулхи йубилейĕ умĕн

Витринăсем тунă

Шупашкарти Тĕп библиотекă Хĕрлĕ çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă йатпа витринăсем тата монтажсем организацилет.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флот пурнăçĕ тата граждан вăрçи çинчен илсе çырнă илемлĕ литературă витринине уçнă. Кунта Н. Островскин „Хурçă мĕнле хĕрнĕ", „Тăвăлпа çуралнисем", Павленкон „На востоке", Фурмăнăвăн „Чапайев", „Красный десант", В. Катайевăн „Я сын трудового народа" тата ытти произведенисем те пур.

Сталинпа Ворошилов йулташсем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ çинчен çырнă кĕнекесен уйрăм витрини пулат.

Витринăсем тунă çĕрте хаçатсемпе журналсенче пичетленсе тухнă паллăрах материалсемпе те усă курăççĕ, вĕсене пухса уйрăм витринă тăваççĕ.

Пирĕн çĕршывра ĕççыннисем мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн 20 çулхи уйавне пысăк интереспа кĕтсе илеççĕ. Тĕп библиотекăра ĕçлекен Петровă йулташ каланă тăрăх, йулашки кунсенче Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флочĕ тата граждан вăрçи çинчен çырнă кĕнекесене вулакансем нумайланса пыраççĕ. Хаљхи вăхăтра уйрăмăнах Ворошилов йулташăн „Сталин тата Хĕрлĕ Çар" йатлă кĕнекине вулакансем нумай.

Т. М-в.

Йубилей кунĕсенче „Разлом" тата „Пограничники" пйесăсене лартаççĕ

Шупашкарти Государствă Академи театрĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флочĕ 20 çул тултарнине уйавлама хатĕрленет.

Академи театрĕнче „Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарчĕ" йатлă темăпа пысăк выставкă пулмала. Ку выставкăра Хĕрлĕ Çар 20 çул хушшинче мĕнле ӳссе вăйланса, хăватланса пынине кăтартакан диаграммăсем, картинăсем, плакатсем пулаççĕ.

Йубилей кунĕсенче театр Лавренев çырнă „Разлом", Билђ-Белоцерковский çырнă „Пограничники" постановкăсене лартса парат.

Спектакљсем умĕн артиссем оборонă çинчен çырнă сăвăсене каласа параççĕ.

С. Ворробйов.

* * *

Епĕр, Шăхасанти вăтам шкулта вĕренекен комсомолецсемпе пионерсем, илемлĕ литературăна питĕ йуратса вулатпăр. Литкружок членĕсен вăйĕпе шкул çумĕнче „çамрăк литератăр" йатлă журнал кăларатпăр. Журнала вĕренекенсем йуратса вулаççĕ, ун çине сăвăсем, калавсем çыраççĕ. Журналăн иккĕмĕш номĕрĕнче В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен ытларах çыртăмăр.

Тăван çĕршывăн шанчăклă хуралçи—Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарнă тĕле—февралĕн 23-мĕшĕнче „Айдар" пйесăна лартма тата тепĕр номĕр журнал кăларма хатĕрленетпĕр.

И. Первов.

Отчотран çитменлĕхсем пурри палăрчĕ

ÇĔРПӲ. Шĕнер кооперативĕ хăйĕн 1937 çулхи ĕçĕсем çинчен отчот туса пачĕ.

Шĕнер кооперативĕн 1937 çул пуçланнă тĕле тавар 43.895 тенкĕлĕх сутăнмасăр йулнă, 1937 çулта тата 506.363 тенкĕлĕх тавар кӳрсе килнĕ. Таварçавăрнăш планне 87,3 процент кăна тултарнă. 1937 çултан 1938 çул валљи 65 472 тенкĕлĕх тавар сутăнмасăр йулчĕ. Вăл шутран 5836 тенкĕлĕх йешчĕксем, михĕсем шутланаççĕ.

Мĕншĕн-ха Шĕнер кооперативĕ тавар çавăрнăш планне тултараймаст? Кооперативра колхозниксене, пайшчиксене мĕнле таварсем кирлине шута илсе пымаççĕ. Йанварĕн 20-мĕш тĕлне нихăш лавкара та спичкă, консервă, мулахайсем, йăвăç кашăксем, бритвăсем т. ыт. те пулмарĕç.

Пай укçи пухас плана та 33 процент кăна тултарнă. Йалти кооператив пуçланнăранпа пай укçи 49.909 тенкĕ пухнă, вăл укçаран 47.704 тенкине тăкакласа пĕтернĕ.

Ăçта кайса кĕнĕ вăл укçа? Таварсем кӳрсе килнĕ чухне 9 проц. тăкак тухмала пулсан, 10,6 проц. тухнă. Çынсенчен илмели укçа 7757 тенкĕ шутланат. Унсăр пуçне ссудă илнĕ укçана тата тавар илсе килнĕ счотсене вăхăтра тӳлейменнипе 7460 тенкĕ штраф тӳленĕ.

Шенер кооперативĕн уйрăм лавкисенче укçана салатса йанисем те сахалах мар, 1937 çул пуçланнă çĕре 1987 тенкĕ пулнă пулсан, 1937 çулта çĕнĕрен 6569 тенкĕ хутшăннă. Çав укçаран пĕр çул хушшинче 4473 тенкĕ кăна шыраса илнĕ.

Çавăнпа та кооператив 1937 çулта тавар сутнинчен 1150 тенкĕ, хатĕрлевсенчен 1790 тенкĕ тата ытти йенчен, пурĕ 14662 тенкĕлĕх сийен курнă.

Тавар сутакансене пĕрмай улăштарса тăнă. 1937 çулта 8 отделенире 14 çын улшăннă. Пĕр Ĕмпĕрт отделенинче çеç 3 çын улшăнса ĕçленĕ. С. Данилов 2000 тенкĕ ытла, ун хыççăнхи В. Блондин 360 тенкĕ ытларах, вĕсем хыççăн Димитрийев çулталăк пĕтнĕ çĕре 994 тенкĕ салатса йанă. Тата Халĕ Ойкасри лавкара Николайева продавщицă ĕçлет. Вăл çу заводĕнче ĕçленĕ чухне 200 тенкĕ ытла, Мами совхозĕнчи столовăйра ĕçленĕ чухне 388 тенкĕ растратă туса тухнă. Ăна пайшчиксем суйламан. Çĕрпӳ райĕçтăвкомĕ пĕрремĕш Вăрманкасси йалсоветне Авров йулташа уполномоченнăй туса йанă. Авров çав вăхăтра Николайева патĕнче ĕçсе çисе пурăннă пирки, ăна лавкара ĕçлеме вырнаçтарса хăварат.

Николайева пайшчиксене килĕшмеле ĕçлемест. Шĕнер кооперативĕн кун пек çитменлĕхсем сахал мар. Кооперативра суту илӳ ĕçне йуратса чăннипех ĕçлекенсем кирлĕ.

И. Михайлов.

ДЖАМБУЛ
Казахстан халăх поечĕ, орденоносец

СОВЕТ СОЙУЗĔ

Калатăп еп: „ССРС"—кӳлĕсем суталаççĕ таврара,
Йем-йешĕл улăхсем сывлăмланса ахах шăрса çакаççĕ.
Çӳлĕ тусене сăнатăп, шурăмпуçне. Шăпчăксем йурлаççĕ пахчара,—
Çавсем мана ачашшăн та хаваслăн шухăша йараççĕ.

Пуйан тăван çĕршывăм ман! Кĕтӳ акумăмра,
Выљăх-чĕрлĕх шутне халђ пине мар, мĕлйунпала шутлаççĕ.
Çĕр айĕнче — руда, уйра — тырпул, сатра — улма, çырла.
Çавсем ман вăтă пуçăма хаваслă шухăш тултараççĕ.

Ман çĕршывăмри халăхсем пурнаççĕ тăванлă çемйе пек,
Ман халăхсенĕн чĕлхисем телей йурри шăрантараççĕ.
Вăл йурăра шăпчăк хаваслăхпе етем вăй-хăватне туйатăп еп, —
Çавсем ман çамрăк кăмăла çĕклентерсе хавхалатаççĕ.

Пушхир тăрăх ĕлĕк чухне çӳренĕ еп куçа-куçа,
Кĕлмĕç аулсене, масарсене нумай-нумай тĕлпулнă.
Халăх çинче патша, халăх çинче хансем хуçа пулса
Ларнă ĕмĕр-ĕмĕр. Вĕсенчен чыс-чапĕшĕн пупсем кĕлтунă.

Хăйăрлă пушхирте тинĕ, ĕнтĕ мĕскĕн халăхăм ман
Пăчă çĕртре, тĕксĕмлĕхре нумай ĕмĕр-хушши тертленнĕ.
Выçă хырăм, çи-пуç çара. Ун нимĕн тивĕçлĕх пулман,
Çапах хĕвел тухасса вăл, ырă çут кун çитессе ĕмĕтленнĕ.

Хĕвел тухнипе еп куртăм çитмĕлвиççĕ çитсессĕн çеç.
Çав самантрах чăн чунăмпа хам вăтăлăха савса çĕн йурă хутăм.
Хăй тăшманĕсене ман халăх çунтарчĕ çисĕмле,—
Аслă Ленина еп пĕлтĕм, аслă Сталина еп куртăм.

Чăнкă Кавказ! Пăрлă сив тӳпӳ сан никçан ирĕлмест,
Татах çӳле кармашан ес, çӳле, пĕлĕте çити.
Анчах, Ленин, Сталин санран, пур сăрт-тусенчен çӳлерех,
Çав генисемсĕр килмен çак пурнăç телейĕ, çак пурнăç сути.

Çавсем çимĕçлетрĕç çеçенхирсене, тайгана такăрлатрĕç,
Йуханшывсене кал-калрах, вăйлăрах йухма майсем парĕç.
Кам пирĕн тăван, кам пирĕн тăшман иккенне тĕрĕссĕн кăтартрĕç.
Хайар пушхире чечеклетрĕç, пушхир тип силне çавсем çеç лăпланатрĕç.

Чечеклĕхре çисет çĕршыв! Никçан ишĕлмест те чакмаст ун вăйхалĕ,
Вунпĕр республик, ирĕклĕ республик чăн-чăн телейпе чечекленчĕç.
Аслă çĕршывăм, манăн çĕршыв! Пĕр çемйен пĕрлешнĕ мĕн пур халăх
Никçан уйрăлми, никам çĕнейми вăй илсе çирĕпленчĕ.

Калатăп еп: „ССРС"—ылтăнланса çисет сăрт-ту,
Суталса ыткăнат, хумланса чӳхенет тинĕс шывĕ.
Сурçĕр пăрĕ ванат, çĕмрĕлет. Епĕр полђус урлă çул тунă,—
Парăнтарат, пурне те çĕнтерет ман аслă çĕршывăм.

Ылтăнлă сăртсене, кĕмĕлпе йалкăшан тусене еп сăнатăп,
Çĕр çийĕ пекех—çĕр айĕнче те иксĕлми пирĕн пурлăх.
Ак иртет тырпул караванĕ. Хăлат пек ыткăлан пуйăса та
Куратăп. Сывлăшра—самољот. Вăл вĕçет сăрт-ту урлă.

Уйава ик тухап. Хĕрсене еп сăнатăп, каччăсене,
Вĕсен сăнĕсем йалкăнса çурхи чечек йевĕр илемлĕн çисеç.
Çĕнĕ хуласем ман, çĕнĕ йалсем хăт кăнтăрла, хăт каçхине—
Илем кӳреççĕ таврана, пĕлĕте çутă сăн ӳкереççĕ.

Сăнатăп еп. Пур халăхсен тăванлăхне куратăп
(Çав самантрах тăшмана чунтан-чĕререн кураймастăп).
Йантрат-ха тумра! Савнăç умра. Савнăç йурри еп йурлатăп.
Ирĕклĕ çĕршывăм, аслă çĕршыв! Сана йуратап, саватăп,
Ăçта пăхсан та—аслă атте Сталина, ун ĕçне еп куратăп.
Мухтатăп ăна. Чĕрери кĕввĕмпе ун çинчен еп йурлап каçăн-ирĕн
Вăл—пирĕн. Пирĕн телей, пурнăç хĕвелĕ вăл пирĕн!

Тăхăрвунвиç çула еп çитрĕм. Çулсем сăрт йевĕр çӳлĕ
Куратăр, вата. Ман пек вата сăвăç çукрах та мар-ши?
Çапах чĕрем вулакан пекех тапат,—телейлĕ ун кунçулĕ.
Йурлат чĕрем, кунсеренех туптат çĕнтерӳлĕ пурнăç маршĕ.

Итлĕр! Манпа пĕрле йурлат пур халăх, çĕршыв йурлат,—
Пур чĕлхесем пĕр сас пулса çĕр чăмăрне кисрентереççĕ.
Сталинла Саккуна вăл сас, ирĕклĕхе, ыр пурнăçа мухтат,
Ман халăхсем мĕнпур етемлăхе ĕçе, кĕрешĕве чĕнеççĕ.

Çĕршыв йурлат. Сас йантăрат. Вăл сас аслати пек кĕрлет.
Ĕçре çеç мар, кĕрешӳре çеç мар—ман халăх йурлама та ăста мĕн.
Пурăн, тăван çĕршыв, пурăн, татах та тĕреклен!
Пурăн, тăван атте, пурăн телейлĕхĕн чи аслă маçтăрĕ—Сталин!

Радиоприйомник лартрĕ

ВĂРНАР. Тĕмпек колхоз правленийĕ кăçал радиоприйомник лартрĕ. Колхозниксем кашни каçах правленине пухăнса радио тăрăх лекци, концертсем итлеççĕ.

Унсăр пуçне, кашни хуçалăхах кăçал радио кӳртме шутлаççĕ.

Н. Анисов

Райĕçтăвком пленумĕнче

ПАТĂРЙЕЛ. Йанварĕн йулашки кунĕсенче райĕçтăвкомăн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленумра Аслă Советăн пĕрремĕш Çеççийĕн итогĕ, 1937 çулта районри бӳджет пурнăçланса пыни тата организацилĕ ыйтусем пулчĕç.

Трибунă çине тухнă Харитонова йулташа алă çупса кĕтсе илчĕç.

Аслă Совет депутачĕ О. Т. Харитонова й. пĕрремĕш Çеççин ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Кунта ларакансем,—тет Харитонова,—есĕр мана шанса, ман çине пысăк шанăç хунăшăн сире пурне те тав тăватăп, сире болђшевикла хĕрӳлĕ салам.

Çеççи ĕçĕ çинчен каланине пленум членĕсем тимлĕн итлесе ларчĕç.

Харитонова йулташ суйлавçăсене хаљхи вăхăтра çуракине хатĕрленессипе вăйлăн ĕçлеме хушрĕ. Суйлавçăсем вăрлăхсене суртласа, машинăсене йусаса пĕтерме обйазателствăсем илчĕç.

Пленум 1937 çулта районри бӳджет начар пурнăçланса пынă, тесе шутлат. Районри бӳджет 1937 çулта тупăш йенĕпе 96,7 процент, тăкак йенĕпе 93,5 процент, йал бӳджечĕ тупăш йенĕпе 78,3, тăкак йенĕпе 73,5 процент пурнăçланнă.

Йалти бӳджета уйрăмăнах Çĕнĕ Ахпӳрт йалсовечĕ 59,4 процент, Аслă Каçал йалсовечĕ 62,3 процент, Йеткер йалсовечĕ 69 процент, çеç пурнăçланă.

Займ пухасси 32 процент, вырăнти налог 50,2 процент анчах пухăннă. Займ пухас ĕçре уйрăмăнах Татмăш йалсовечĕ кайа йулса пырат, вăл плана 2,74 процент çеç тултарнă. Кивĕ Ахпӳрт йалсовечĕ 6,7 процент, Мăнтăр йалсовечĕ 9,1 процент тултарнă. Чапайев йачĕпе тăракан, „Болђшевик", „Васильевка" колхозĕсем ку тарана çитсе те займ укçине пĕр пус та пухман.

Бӳджетра халăха çутта кăларас ĕçсем çине йама палăртнă укçа-тенкĕпе 97,9 процент усă курнă. Сывлăха сыхлас йенĕпе райбӳджета 88,5 процент çеç пурнăçланă.

Красномайск, Кивĕ Ахпӳрт, Çĕнĕ Ахпӳрт, Анат Туçа, Аслă Каçал йалсовечĕсем вулав çурчĕсене, трахом, фелђшер пункчĕсене вутăсăр тата унта ĕçлекен работниксене 3—4—5 уйăх ĕç укçи памасăр тытса тăраççĕ. Çакăн пирки те Сăкăтра час-часах вулав çурчĕн пуçлăхĕсем улшăнса тăнă. Татмăшри трахработник Кузнецов октйабĕрĕн 15-мĕшĕнчен вара ĕç укçи илмен. Çĕрпӳ йалсоветĕнчи фелђшер пункчĕ вутăсăр ларат. Йеткерпе Аслă Каçал йалсовечĕсем учителсене 4—5 уйăх хушши хватер укçи паман. Шахран йалсовечĕ (председател Димитрийев) вулав çуртне 1938 çулшăн хаçат-журнал илсе паман. Анат-Туçари пуçламĕш шкулта вутă çуккипе час-часах улăм хутаççĕ. Йеткер йалсовечĕ пуçламĕш шкула „вут илме" тесе 3 тенкĕ те 32 пус укçа панă. Тĕлĕнмеле!

Пленум 1938 çулта район бӳджечĕпе йал бӳджечĕсене пурнăçласа пырасси пирки тивĕçлĕ решени йышăнса хăварчĕ.

Н. Квасов.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн депутачĕ О. Т. Харитонова йулташ студентсем патĕнче

ПАТĂРЙЕЛ. Çак кунсенче педучилищăри вĕрентекенсемпе вĕренекенсем хушшинче ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн депутачĕ, Патăрйел райĕçтăвком председателĕ О. Т. Харитонова йулташ пулчĕ. О. Т. Харитонова йулташ Çеççире Сталин йулташпа тата унăн çывăх соратникĕсемпе пĕрле канашлани çинчен каласа пачĕ.

Вăл пире, вĕрентекенсемпе вĕренекенсене, йаланах болђшевикла ĕçлесе, хамăр хушăмăрта пытанса пурăнакан тăшмансемпе вĕсене пулăшакансене çийĕнчех çапса саламма тата парти организацисен коммунисене партирен кăларнă чухне пулнă йанăшсем çинчен, партирен кăларнисен апеллђацийĕсем çине формалђнă-бӳрократла пăхни çинчен тата çав çитменлĕхсене пĕтермели майсем çинчен ăнлантарса пачĕ.

Г. А. Рахмуллин.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителстви

38,2 километр тăршшĕ лини хывнă

Лини хывакан бригадăсем йанварĕн 2-мĕшĕнче пĕтĕмпе 1350 метр тăршшĕ лини хывнă. Вăл шутран Трак расийесĕнче 700 метр, тĕп çул çинче 650 метр тăршшĕ хывнă. Çапла, февралĕн 3-мĕш тĕлне 38,2 километр тăршшĕ лини хывса, бригадăсем 63-мĕш километра çитрĕç. Мăн Çавал кĕперĕ патне çитиччен тата 11 километр тăршшĕ лини хывмала.

Лини хывассине пĕр чăрăнусăр илсе пымала тума 17500 кубла метр çĕр чавса купаласси те вĕçленсе пырат. Февралĕн 3-мĕш тĕлне колхозсем 12773 кубла метр, „ЛК" екскаватор 2530 кубла метр çĕр чавса купаланă.

Траксен чĕнĕвне ырласа

ЕЛĔК. Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче лайăх ĕçлекен Трак районĕнчи колхозниксем чĕнсе каланине сӳтсе йавасси колхозсенче сарăлсах пырат. Колхозсем уйрăм бригадăсем организацилесе чукунçул строителствине ĕçлеме кайаççĕ. Акă çак кунсенче Вырăс Сурăм йалсоветне кĕрекен колхозсенчен çуран 6 çын, лашапа 15 çын, Пиçенер йалсоветĕнчен çуран—24, лашапа—8, Мăн Шĕвĕш колхозĕнчен çуран 12, лашапа 3, Тени йалсоветне кĕрекен колхозсенчен çуран 16 çын, лашапа 7 çын ĕçлеме карĕç.

Анчах та кăна çителĕклĕ теме çук-ха. Районĕпе илсен чукунçул строителствинче кашни кун çураннисем 124 çын, лашапа ĕçлекенсем 200 çын ĕçлемеле. Пайанхи куна çурри те ĕçлемеççĕ. Панкли, Иванкино, Токанаш йалсовечĕсем чукунçул строителствинче пачах ĕçлемен.

Чукунçул строителствинче пур колхозсем те массăлăн хутшăнса ĕçлени кирлĕ.

Вас. Йефремов.

П. Н. ОСИПОВ
Шупашкарти поликлиникă директорĕ, доктор

Шупашкарта пылђчăкпа сиплемели уçăлнă тĕле

Пирĕн рабочисемпе хресченсен государстви халăх сывлăхĕ сыхлас ĕçе ĕççыннисен мĕлйунлă массисен интересĕсемшĕн туса пырат,—ку тĕлĕшпе те Совет Сойузĕ тĕнчери пĕртен-пĕр çĕршыв пулса тăрат. Сталинла Конституци медицинă пулăшувĕ тӳлевсĕр пулмала турĕ. Çакă ĕнтĕ вăл, ĕççыннисен сывлăхне сыхлас ĕçе калама çук çӳле хăпартса, „рабочисен çĕнĕ, сывлăхлă та пурнăçра хаваслă, совет çĕршывĕн вăй-хăватне кирлĕ пек çӳле хăпартма, ăна тăшмансем тапăннисенчен кăкăрпа тăрса сыхлама пултарулă ăруне ӳстерсе çитĕнтерме" (Сталин) май парат.

Капиталисăмла çĕршывсенче медицинă, Вересайев пит тĕл каланă пек, „пуйансемпе ирĕклĕ çынсене сыватмали ăслăлăх анчах" пулса тăрат. Ĕçхалăхĕ тĕлĕшпе патша Российĕнче медицинă „вĕсем пуйан та ирĕклĕ пулас пулсан вĕсене мĕнле сыватма пуласси çинчен калакан теорилĕ ăслăлăх анчах пулнă, вĕсем пуйан мар, ирĕклĕ те мар чухне вĕсене сыватма мĕн памала килни медицинăран ним хĕрхенӳсĕр мăшкăлани çеç пулнă, урăх нимĕн те мар" (Вересайев).

Пирĕн çамрăксем буржуалă медицинă ăслăлăхĕ çинчен кĕнекесем тăрăх çеç пĕлеççĕ. Пирĕн çĕршывра çĕнтернĕ рабочисемпе хресченсем хăйсен сывлăхне сыхлама, ĕçре тата пурнăçра медицинăн чи çӳлĕ çитĕнĕвĕсемпе усă кураççĕ, пирĕнтен кашнийех çыншăн сталинла тăрăшнине туйса тăрат, çакă вăл пире ĕçре хаваслăх парат, малашлăх çине шанчăклăн пăхакан тăват.

Пирĕн тăван çĕршывра, вăрçă умĕнхи вăхăтрипе танлаштарсан, çынсем вилни ĕлĕкхин виççĕмĕш пай чухлĕ чакрĕ, ачасем вилни çуррине йахăнах чакрĕ, çынсем чирлени сахалланчĕ, ачасем çурални тăтăшах ӳссе пырат,—ку вăл пĕтĕмпех пирĕн пурнăç лайăхлансах пынине кăтартса тăрат.

Совет Сойузĕнче ĕççыннисен массисем санаторисемпе, сиплĕшывсемпе, пылђчăкпа сыватакан курортсемпе, вырăнсенче електричествăпа тата шывпа сипленипе т. ыт. те пит анлăн усă кураççĕ.

Пирĕн халăх тивĕçлипех ĕнтĕ, сывлăха сыхлакан органсемпе правителствăран курортлă майпа сыватассине, вырăнсенче физио-терапи пулăшуне организацилесе, чирлисем патне çывхартма ыйтат.

Чăваш республикĕнчи ĕççыннисем хаљхи вăхăтра сарăлса пыракан ĕçпе: електричествăпа—çутăпа—шывпа сыватас ĕçпе интересленеççĕ. Çавна Шупашкарти поликлиникăра сипленекенсен йышĕ ӳссе пынинченех курма пулат. Шупашкарти поликлиникăн физио-терапи отделенийĕ чирлисене 1931 çулта 20.160 çынна, 1936 çулта—56 613 çынна, 1937 çулта—74.420 çынна сипленĕ.

Нервăсен системи, ал-урасем йе чĕре—йун тымарĕсем йăвăр чирленĕ çынсем ĕлĕкхи вăхăтра ĕçлейми пулса инвалида тухнă, халĕ ĕнтĕ вĕсем çĕршерĕн, пиншерĕн сывалса, малтанхи пекех ĕçлекен пулаççĕ.

Физио-терапи пулăшувĕ курортра сыватни вырăннех пулса тăрат,—çавăнпа ĕççыннисем çакăн пек пулăшува малала ӳстерсе пыма ыйтаççĕ.

Йулашки вăхăтра Шупашкарти поликлиникăна пур районсенчен те ыйтусем килеççĕ: пылђчăкпа сиплесе сыватмали хăçан уçăлат, мĕнле пылђчăк сиплĕ, мĕнпе чирлисене пылђчăкпа сыватаççĕ, пылђчăкне кăнтăр йенчи курортсенчен кӳрсе килме пулат-и, кунтах пылђчăкпа сипленни курортри пек пулат-и, тесе ыйтаççĕ.

Çынсем пылђчăкпа тахçан авалхи вăхăтрах—римљансем, грексем, йегиптансем сипленнĕ. Вунсаккăрăмĕш ĕмĕрте пылђчăкпа сиплесси Хĕвеланăç Йевропăра та—францире, Швецире, Германире сарăлнă. Вунтăххăрĕмĕш ĕмĕрте Крымра та (Саки) кӳлĕсенчи пылђчăкпа сиплеме пуçланă.

Иртнĕ ĕмĕрти 30-мĕш çулсенче пылђчăкпа сиплесси вăл халăх хушшинчи медицинă пулнă, вунтăххăрăмĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш пайĕнче тин пылђчăкпа тата торфпа сиплессине медицинăра ăслăлăх кăтартиă пек сăлтавланă. Пылђчăкпа сиплесси пирĕн çĕршывра Октйабĕр революцийĕ хыççăн тин анлăн сарăлчĕ.

Чирлисене сиплеме пуринчен ытла йушкăнлă тата торфлă пылђчăкпа усă кураççĕ. Йушкăнлă пылђчăк-тăварлă шыв тăнă çĕрте биологилĕ пит сложнăй процессене пула (тĕрлĕрен микроорганисăмсем пурăннипе) пулат. Чирлисене сиплеме торф пылђчăкĕпе те ăнаçлăн усă кураççĕ.

Епĕр ыйтнипе Чăвашсен ăслăлăхпа тĕпчев институчĕ пирĕн патăрти торф пылђчăкĕ чирлисене сиплеме йурăхлине сăнаса пăхрĕ. Вара çакă курăнчĕ—„Горелое болото" текен çĕрти (йалăм йенче, Шупашкартан тăвала 22 километр) тата Çĕмĕрле районĕнчи торф пылђчăкĕ хăйĕн физикăлă-химилĕ пахалăхĕпе паллă курортсенчи торф пылђчăкĕнчен пĕртте кайа мар.

Анчах хаљхи вăхăтра, механизаци çуккипе, вырăнти торфа кăларса хатĕрлеме хакла ларат, çавăнпа епĕр халлĕхе унпа усă курмастпăр-ха.

Шупашкарта пылђчăкпа сиплемели çак çулхи пĕрремĕш кварталта уçăлат,—ăна валљи пылђчăкне Елђтон кӳллинчен кӳрсе килнĕ. Унти пылђчăк чирлисене сыватас ĕçре пит пахаскер.

Пылђчăкпа сипленĕ чухне пуринчен ытла чирлĕ çынăн ал-урисене, ӳт-пӳвĕн пĕр-пĕр пайне пылђчăкпа витеççĕ, хĕрарăм чирĕ чухне тампон хураççĕ, йе тата, уйрăмах кирлĕ чухне, çынăн ӳт-пӳне пĕтĕмпех пылђчăкпа витеççĕ. Çавна тума пылђчăкне, кама мĕнле кирлине кура, 40—55 градус таран ăшăтаççĕ. Чирлĕ çынăн, кун сиктерсе çӳресен, 15—20 хут сипленмеле.

Пылђчăкпа пит нумай чирсенчен сиплеççĕ, ăна врач, етемĕн пĕтĕм организмĕн сывлăхне пăхса, уйрăмăн хушсан тумала. Ревматисăм пулсан, периферири нервă системи чирлесен, кăкăрти йе хырăм таврашĕнчи, тата арçынăн йе хĕрарăмăн архатĕрĕсем таврашĕнче чирлесен тата урăх чирсенчен пылђчăкпа сиплеççĕ.

Шупашкарта пылђчăкпа сиплемели уçăлсан Чăваш республикĕнчи халăх, инçетри курортсене кайmасăрах, килтех темеле, пылђчăкпа сиплекен инçетри курортсенчен йапăх мар пулăшу курма пултарат.

Совет Сойузĕнчи курортсем пит нумай çынсене сиплеççĕ, анчах вĕсем чирлисене пурне те йышăнса çитерейменççĕ-ха. Тата инçетри курорта кайма укçа-тенкĕ нумай тухат, работник нумай вăхăтлăха производствăран уйăрăлат, пысăк çемйелисем йе кăкăр ĕмекен ачалă амăшĕсем инçетри курорта каймаççĕ те. Шупашкарта пылђчăкпа сыватмали уçни пит кирли, вăхăтли ĕнтĕ курăнсах тăрат.

Анчах ку ĕçре пирĕн пĕр йаврлăх пур, çав йаврлăха кĕске вăхăтра çĕнтерес пулат. Ĕç акă мĕнре: чирлĕ çынна пылђчăкпа йе електричествăпа — çутăпа — шывпа сиплесси чылай вăхăта тăсăлат. Çав вăхăтра районсенчен килекен чирлĕ çынсен, вĕсене валљи общежити çук пирки, гостиницăра йе уйрăм çынсен хватерĕсенче пурăнса расхут нумай кăлармала килет тата çавна пула сипленин результачĕ те кирлĕ пек пулаймаст.

Чăваш АССР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариачĕн, партипе совет общественноçĕ пулăшнипе, сипленме районсенчен килекенсене валљи общежити туса памала.

Кун çинчен райкомол пĕлет-ши?

ТРАК. Çĕн Йĕкĕтри „Свобода" колхоз çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацийĕн ĕçĕсем хаљхи вăхăтра сӳнсе ларнă. Комсорг Иван Кључников пачах ĕçлемест. Вăл колхоз председателĕнче ĕçленĕ вăхăтра та колхоза начарлатса пынă. Колхозри ĕç тухăçлăхне хавшатас шутпа колхозри стахановкăсемпе ударницăсенчен мăшкăланă. Лайăх ĕçлекен бригадирсене вырăнтан кăларнă.

Комсомол организацинче нимĕнле ĕç те çук. Унта миçе çын тăнине никам та пĕлмест. Кључников комсомол хуçалăхне ишĕлтернĕ, виçĕ çул хушшинче пĕр çынна та çĕнĕрен комсомола илмен. Трак райкомолĕ ку организаци çинчен маннă, ун çине çаврăнса та пăхман.

С. Васиљков.
Н. Кулђгай.

Тăрăшса вĕрентет

Çатра Хучахматри туллимар вăтам шкулти Антонов учител Пикшик йалĕнчи (Шупашкар р.) хутла пĕлменнисене 6 çынна вĕрентсе кăларчĕ. Çав йалтах, вăл хутла сахал пĕлекенсене вĕрентме тытăнчĕ. Хутла сахал пĕлекенсем шкулĕнче 7 çын вĕренеççĕ.

Серебрйаков.

Лигă нацин çĕрĕмĕш çессийĕ хупăннă

Литвинов йулташ тухса калани

Йанварĕн 31-мĕшĕнче Лигă наци уставне улăштарас ыйтăва пăхса тухакан Комитетра Швеци, Швейцари, Польшă тата Голланди делегачĕсем тухса каланă. Вĕсем Лигă наци уставĕн 16 статйине (вăл статйа вăрçă пуçаракансене хĕсесси çинчен калат) вайсăрлатма, ăна пурнăçа кĕртесси обйазательнă мар туса хума сĕннĕ.

Февралĕн 1-мĕшĕнче çав Комитетăн ларăвĕнче ССР Союзĕн Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ М. М. Литвинов йулташ тухса каланă.

Лигă нацине „мирлĕ саманана сыхлассипе нимĕн те çыхăнса таман, хăйĕн членĕсем çине нимĕнле обйазательствăсем те хуман" организаци туса хума хăтланакан державăсен ĕçĕсене Литвинов йулташ хытă критиклenĕ.

„16-мĕш статйа, тенĕ Литвинов йулташ, вăрçăпа тапăнни пуçлансан çавна чарса хурас тĕллев çеç мар лартат, унăн тата тепĕр, пысăкрах задачă та пур—вăрçăпа тапăнас текене асăрхаттарса, вăрçăпа тапăнассине чарса тăмала. Вăрçăпа тапăнакан çĕршывсемпе вĕсен вăрттăн союзникĕсем пĕтĕм Лигă нацине хирĕç, уйрăмах 16-мĕш статйана хирĕç çине тăрсах кĕрешни çавăнтан килет те ĕнтĕ. Çапла ĕнтĕ, ку статйан хакĕ пурри, ăна кăларса пăрахни усăлă мар. 16-мĕш статйа Лигă наци активĕнче чи хакли, мира сыхламали пулса тăрат".

* * *

Февралĕн 2-мĕшĕнче Лигă нацин çĕрĕмĕш çессийĕ хупăннă.

Çессире Китай ыйтăвĕ тĕп вырăнта пулнă. Китайăн пĕрремĕш делегачĕ Веллингтон Ку хăйĕн правителстви йачĕпе çессин йанварĕн 27-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче Китайа хӳтлеме кирлĕ ĕçсене тума ыйтнă.

Китай делегацийĕ ыйтнипе Китайа хӳтлеме мĕн тумалисене палăртса хатĕрлеме тăватă çĕршывăн: Англин, Францин, ССР Союзĕн тата Китайăн представителĕсен канашлуне пухнă. Çапла резолюци пройектне хатĕрлесе, Лигă наци Совечĕн хупă ларăвĕнче сӳтсе—йавма тăратнă.

Лигă наци Совечĕн ларăвĕ февралĕн 1-мĕшĕнче пулнă. Йутçĕршывсенчи пичет пĕлтернĕ тăрăх, çав ларура, вăрçăпа тапăнакансен тусĕсем резолюцийе хирĕç атакă тунă. Советăн ларăвне тепĕр вăхăта куçарнă. Лигă Совечĕн февралĕн 2-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче Китай ыйтăвĕ пирки резолюцийе пурте пĕр сасăпа йышăннă, икĕ делегат çеç (Польшăпа Перу делегачĕсем) сасăламан.

Резолюци Лигă членĕсене Лигă наци пленумĕ 1937 çулхи октябĕр уйăхĕнче йышăннă решенийе аса илтерет,—вăл резолюцире Лигă наци членĕсене—Китай хăйне тапăнакана хирĕç тăнива вайсăрлатма пултаракан нийепле ĕçсене те тумала мар, тесе чĕннĕ,—тата „кашни уйрăм—пултарнă таран Китайа пулăшу парасси çинчен сӳтсе йавма" чĕннĕ. Резолюцин иккĕмĕш пайĕ Лигă наци членĕсене, Инçет Хĕвелтухăçĕнчи ĕçсемпе уйрăмах интересленекенисене, интересленекен ытти державăсемпе килĕшӳлĕ пулса, „Инçет Хĕвелтухăçĕнчи конфликта чарма пултаракан мĕнле те пулин ĕçсене тума" хушат.

(ТАСС).

Йапонире татах нумай çынсене арĕсленĕ

Вăрçă вăрăма тăсăлнă май Йапонире политикăла лару-тăру çивĕчленсех пырат. Халăх хушшинче вăрçа хирĕç шухăшсем ӳссе пыраççĕ—савă ĕнтĕ Йапонири влас-ра тăракан классене пит пăшархантарат.

Йапонин реакцилĕ правителстви хăйне хирĕçле шухăшлакансене террорпа, массăлăн арĕслевипе пусарса лартма хăтланат. Нумай пулмаст 300 çын ытла арĕслени çинчен пĕлтернĕччĕ. Йапонири пичет хаљ каллех пĕтĕм çĕршывра, „халăх фрончĕ майлă тăракансене"—палăртатпăр тесе, нумай çынсене арĕслени çинчен пĕлтерет, Февралĕн 1-мĕшĕнче 30 çынна арĕсленĕ, вĕсем хушшинче общеcтвалă ĕçри паллă çынсемпе литератăрсем нумай. Арĕсленисем хушшинче профессор Минобе (паллă профессор Минобе ывăлĕ, ăна, Йапони „конституцине" либералла ăнлантарнăшăн тесе, аслă палатă членĕн йачĕсĕр хăварнă тата Аслăлăхсен Академинчен хăваласа кăларнă), паллă публицист профессор Абе Исаму тата ыттисем те.

Токиора анчах мар, Осака, Киото, Хиросима, Окайама тата ытти хуласенче те çынсене арĕсленĕ.

(ТАСС).

Пăлхавçăсем патĕнчен тараççĕ

ПАРИЖ, 29-I (ТАСС). Еспань агенствин Танжерти корреспонденчĕ пĕлтерне тăрăх, Сеутаран Испани Марокки пулăçисен киммисене ларса тарнă çынсем Касабланка портне (Франци Марокки) пынă. Тарнă çынсем пĕлтерне, вĕсем Испани Мароккинчи пăлхавçăсем аллинчи вырăнтан тарма тахçанах шутланă. Вĕсем пăлхавçăсем патĕнчен тарма май килсе тухсанах çавăнпа усă курнă.

Рабат портне (Франци Марокки) Ларачеран (Испани Марокки) буксир пынă. Вуксир çинче Испанири пăлхавçăсем тытса илнĕ çерген тарнă 7 çын пулнă. Вĕсенчен иккĕше çар çыннисем.

ХРОНИКĂ

Дипломатилĕ каласӳсем пулса иртнĕ хыççăн, ССР Союзĕпе Турци правителствисем решени йышăннă. Вăл решени тăрăх кăçалхи мартăн 31-мĕшĕнчен ССР Союзĕн Измирпе Карсри консульствисем тата Турцин Одессăри, Бакури, Ереванри тата Ленинаканри консульствисем хупăнаççĕ. Кашни государствăн тепĕр государствă территорийĕнче пĕрер консульствă пулаççĕ, совет консульстви Стамбулра пулат тата Турци консульстви Батумира пулат.

(ТАСС).

Ӳкерчĕк синче: Çĕнĕ Павари вăтам шкулăн çĕнĕ сурчĕсем (Йелчĕк районĕ).

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Февраль уйăхĕнче „Работница" журнал 15 çул тултарат

„Работница" совет хĕрарăмĕсен пит паллă тата йуратнă журналĕсенчен пĕри пулса тăрат. Вăл хăй тавра вулакансен пысăк çарне организациленĕ. „Работница" журнала çырăнса илекенсен хисепĕ 1923 çулхи йанвар уйăхĕнче 10.000 пулнă пулсан, 1938 çулхи йанвар уйăхĕнче 350.000 çитнĕ. Малтанхи çулсенче журнала 1—2 пин çыру пынă, 1937 çулта 25 пин ытла çыру пынă.

Правителствă 1933 çулта „Работница" журнала хĕрарăмсен массисене коммунисла воспитани парас тĕлĕшпе ударлă ĕçленĕшĕн „Ĕç Хĕрлĕ Йалавĕ" орденĕ парса наградăланă.

„Работница" журнал вăл йулашки пилĕк çул хушшинче Сталин йулташ журнал 10 çул тултарнă кун панă катартусене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе пынă. Сталин йулташ хăйĕн саламĕнче çапла çырнă:

„Работница" журнала вăл тухма пуçланăранпа 10 çул тултарнă кун хĕрӳлĕн саламлатăп. Ăна пролетарилĕ хĕрарăмсен массисене социалисăм пĕтĕмĕшпех çĕнтерессишĕн кĕрешме пирĕн учител—Ленин хушса хăварнă аслă ĕçсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме вĕрентсе çитĕнтерес ĕçре çитĕнӳсем тума ырă сунатăп".

Сталин йулташ саламлани совет çĕршывĕн хĕрарăмĕсен массисене Сталинла иккĕмĕш пйатилеткăна пурнăçа кĕртессишĕн, хамăрăн тăван çĕршывăн оборонă пултарулăхне çирĕплетессишĕн, пирĕн çĕршывра социалисăм пĕтĕмĕшпех çĕнтерессишĕн кĕрешме тата ытларах хавхалантарчĕ.

„Работница" журнал 15 çул тултарнă май ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ журнал йубилейне центрти пичетре, радио тăрăх докладсем туса тата редакцисем организациленипе работницăсен, журнала вулакансен, журнал рабкорĕсен пухувĕсене ирттерсе паллă тума хушнă.

„Работница" журнала рабочисемпе рабочи арăмĕсем нумай ыйтнине шута илсе, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ 1938 çулта „Работница" журнал тиражне 400 пин екземпльара çити ӳстерчĕ.

Вулакансемпе, рабкорсемпе тата журнала çырăнса илекенсемпе политикăлă тата массăлă ĕçе лайăх организацилеме, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ „Работница" журналăн редакцине пысăк промышленнăçлă центрсенче хăйĕн йаланхи корреспонденчĕсене тытма ирĕк панă.

(ТАСС).

Хăйулă курсант

ХАБАРОВСК, 31—1. (ТАСС). Хабаровскри аероклубăн пилотсен шкулĕнче вĕренекен курсант—Молотов йачĕпе тăракан заводри стахановец—Романтейев Василий иртнĕ кунсенче аеродром тĕлĕнче вĕренмеле вĕçнĕ.

Романтейев йулташ сывлăша вĕçсе хăпарсан, „мертвая петля" тума тытăннă. Самолет ураписем çӳлеле пулнă вăхăтра, кĕтмен çĕртен, руль тытса пымали пасăлнă. Машинă пĕр самант хушши сывлăшра чарăнса тăнă, унтан тӳрех айалала анма пуçланă. Çамрăк пилот руль тытса пымалине йусама тăнă, анчах йусайман Кайри кабинăра машинăна тытса пымали тепре пулнă. Анчах унта пассажир пулнипе Романтейев йулташ кайри кабинăна пырайман.

Çĕртен пĕр 30 метртра самолет айалала мар, айăккала вĕçнĕ самант килсе тухнă. Романтейев йулташ хăйулăха пĕр самантлăха та çухатман. Вăл пассажире:

— Ручкăна хăв патнала турт—тесе кăшкăрнă.

Пассажир мĕн хушнине тунă, самолет аеродром хирĕ тăрăх лайăх вĕçсе кайнă. Романтейев йулташа хăйулă пулнăшăн тата хăраса ӳкмесĕр лайăх анса ларма пултарнăшăн тав тунă тата преми панă.

КĔСКЕН

ТУТАРКАС. Муркаш йалсоветĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз вулав сурчĕ валльи çĕнĕ çурт лартрĕ.

Вулав çуртне радио кĕртнĕ. Каçсеренех колхозниксем вулав çуртне пухăнса радио тăрăх докладсем, концертсем итлеççĕ.

П. Краснов.

ТРАК. Тĕрерти Йефимов почтальйон тăрăшса ĕçленипе çак çулшăн 1400 тенкĕлĕх тĕрлĕрен хаçат-журналсем сарнă. Çыраннă хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра çитерсе парат.

Андрейев

Лайăх ĕçлекен почтальйонсем

ВĂРНАР. Массă хушшинче хаçат-журнал сарассипе районри чылай почтальйонсем тăрăшсах ĕçлеççĕ. Пăртасри Алексейев почтальйон çак çулшăн 2 930 тенкĕлĕх ытла тĕрлĕрен хаçат журнал сарчĕ. Çыраннă хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра çитерет.

Санарпуçĕнчи Павлов почтальйон хаçат-журнал 2064 тенкĕлĕх сарса, хăйĕн планне ытлашшипех тултарчĕ. Хаçат-журнал сарас ĕçре вăл йаланах массăпа çыхăнса ĕçлет, пичетĕн усси çинчен халăха ăнлантарса парат.

Иртеменкассинчи почтă агенчĕ Молчанов йулташ почтă ĕçĕнче 5-мĕш çул ĕнтĕ ĕçлет. 5 çул хушшинче лайăх ĕçленипе темиçе хут та преми илчĕ. Хăйĕн ĕçне вăл питĕ йуратат. 1938 çулшăн хаçат-журнал сарас плана ытлашшипех тултарчĕ. Унăн агенствинче ĕçлекен почтальйонсенчен, уйрăмах, 65 çулхи Кошкин йулташ аван ĕçлесе пырат. Вăл çӳрекен йалсенчи кашни хуçалăхах хаçат-журналсем çырăнса илсе вуласа пыраççĕ.

Лайăх ĕçлекен почтальйонсем хушшинчех начар ĕçлекен почтальйонсем те пур-ха. Хапăсри агенствăра ĕçлекен Йежов хаçат-журнал сарас ĕçпе вуçех те интересленмест. Тепĕр чухне çырăнма пынă çынсене хуса кăларса йанисем те пулнă. Декабрĕн 20-мĕшĕнче Сендимиркинă йалсовечĕн председателĕ хаçат-журналсем çырăнса илес тесе агенствăна пынă пулнă. Анчах Йежов хаçат çырантарас вырăнне, хуса кăларса йанă. Çавăн пирки те йанвар уйăхĕшĕн йалсовечĕ хаçат-журнал çырăнмасăрах йулнă. Çапла ĕçленипе те ĕнтĕ агенствă хаçат-журнал сарас плана тултарса пыраймаст. Планпа 2.500 тенкĕлĕх сармала пулнă пулсан, 1153 тенкĕлĕх кăна сарнă.

И. Иванов.

Социаллă обеспечени пайĕсем

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Чăваш АССР Конституцин 63 тата 66 статйисем тăрăх райĕçтăвкомсем тата хула совечĕсем çумĕнче социаллă обеспечени пайĕсем тăвасси çинчен постановлени йышăннă. Ку постановлени тăрăх, социаллă обеспечени пайĕсем кашни 25 районри ĕçтăвакан комитет çумĕнче тата Шупашкар, Улатăр, Çĕмĕрле хулисен совечĕсем çумĕнче пулаççĕ.

1938 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен малала пенси ĕçĕсене пĕтĕмпех районсенчи тата хуласенчи социаллă обеспечени пайĕсене йараççĕ. Шупашкарти тата Улатăрти районсем хушшинче шутланнă тӳлев пункчĕсене пĕтермеле тунă. Февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пенсионерсен ĕçĕсене хăйсем пурăннă тăрăх районсенчи йе хуласенчи социаллă обеспечени пайĕсем йышăнаççĕ. Пенси ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕсем туса пыраççĕ.

Пурнăçран йулма йурамаст

ПСК(б)П Парти Чăваш Обкомĕн парти пропагандипе агитаци тата пичет пайĕ „Агитатор блокночĕ" кăларса тăрат. Блокнота чăвашла кăларни аван йапала. Анчах та вăхăтра тухайманнипе пурнăçран йулни питĕ тарăхтарат.

„Агитатор блокночĕ" 12—13-мĕш № 1937 çулхи нойабĕрĕн 1-мĕшĕнче пичете панăскер 1938 çулхи йанварĕн 26-мĕшĕнче тин çапăнса подписчиксем патне саланат. Блокнот пичете панă хыççăн виçĕ уйăхран çеç подписчиксем патне çитнĕшĕн кам айăплă-ши? Паллах, редакци. Блокнот редакторĕн мĕнле чĕри ыратмаст-ши куншăн?

ПСК(б) Парти Чăваш Обкомĕ кăларса тăракан „Ленин çулĕпе" журнал çинчен те çакнах каламала. Журналăн 9—10 №-не (сентябĕр—октябĕр) подписчиксем йанварĕн 26-мĕшĕнче çеç илме пултарнă. „Ленин çулĕпе" журнал та, „Агитатор блокночĕ" пекех, пичете панă хыççăн виçĕ уйăхран çеç çутă тĕнче курма пултарнă.

„Ленин çулĕпе" журнал редакторĕ, пĕр вăтанмасăрах, 1937 çулхи ийунь уйăхĕнчи директивсене журналта пичетлесе подписчиксене 1938 çулхи йанварте вулама сĕнет. Тĕлĕнмеле вĕт пирĕн хисеплĕ редакторсем „ĕçленинчен"!

„Капкăн" та çакăн пекех виçĕ уйăхран тухма „ĕлкĕрет". Çавăнпа та ĕнтĕ журналсене çырăнса илес хавăслăх пĕтет. Журналсен тиражĕ те чакма пултарат. „Ленин çулĕпе" журналăн тиражĕ çавăнпа та 800 екз. анчах пулас. Паллах, журнал вăхăтра тухса тăрас пулсан, кашни коммунисах çырăнса илме тăрăшмала.

Д. Обофоров

Ачасен республикăри техникăла конкурсне хатĕрленеççĕ

Чăваш АСС Республикинчи Çутĕç халăх комиссариачĕпе ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕ йышăннă тăрăх февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа майăн 1-мĕшчен пыракан ачасен республикăри конкурсне Шупашкар хулинчи шкулсенче вирлĕн хатĕрленеççĕ.

Шкулсенче конкурса тăратма детекторлă радиоприйомниксем, передатчиксем, авиомоделсем, фото-аппарат т. ыт. тума тытăннă. Шкулсенче ачасен техникăла кружоксем ĕçлеме пуçларĕç.

Акă, 5-мĕш №-лĕ шкулта вĕренекен Лакомкин конкурса тăратма фотоаппарат тăват.

Експонатсене тума Шупашкарти ачасен техникăла станцийе пулăшса тăрат.

С. Воробйов.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

АСЛĂЛĂХ ПАЙĔ

МЕТЕОРСЕМ

ЫЙТУСЕМ: 1) 1937 çулхи декабĕрĕн 28-мĕшĕнче каçхине 10 сехетре хĕвеланăç йенчен, пĕлĕт тӳпинчен, хӳрелле, пуçĕ пысăк çутă çĕр çине укрĕ, çакăн пек пулнипе таврари çанталăк ăнтăрлахинчен те ытларах çутăлса кайрĕ, вăл пĕр çекундăран ытла тăсăлмарĕ. Епĕр çакна ăнланса илеймеспĕр, редакцинчен çак çӳлте пулса иртнĕ йапала çинчен ăнлантарса пама ыйтатпăр.

Ишлей р. Вархандейев, Орлов, Волков, Савелйев, Мешков, Данилов, Йетĕрне р. Йаковлев.

2) Мĕн вăл метеор? Метеор çăлтăрсенчен мĕнле уйăралат?

Ишлей р. Данилов А.

3) Кĕркунне çитсен çăлтăрсем мĕншĕн чăмаççĕ?

Йетĕрне р. Мовсçейев М.

ОТВЕТ. Çакăн йышши ыйтусем тата ытти йулташсенчен те нумай килнĕ. Вĕсене пурне те пĕрлештерсе ответ паратпăр.

Çĕр хĕвел тавра кăшт тăрăхла питĕ пысăк унка туса çаврăнат. Çак ункăн урлăшĕ 300 мĕлйун километра йахăн. Унăн варринчен инçех те мар (еллипсăн фокусĕнче) хĕвел вырнаçнă.

Хĕвел тавра çĕр çеç мар, тата ытти çĕр йевĕрлĕ шарсем, планетăсем, çаврăнса çӳреççĕ. Пысăк планетăсем çĕрсĕр пуçне тата саккăр, пĕчĕккисен хисепĕ питех те нумай. Хĕвел тавра тата кометăсем текен йапаласем çаврăнса çӳреççĕ. Планетăсен çулĕ ункăран нумайах уйăралман еллипс пек пулат (Еллипс кăшт тăрăхла ункă). Кометăсен çулĕсем питĕ вăрăм тăсăлакан еллипс пек пулаççĕ. Çак тăсăлнă еллипсен пĕр вĕçĕн сывăхĕнче хĕвел пулат. Кометăсем çакăн пирки хăш чухне хĕвел патне çывхараççĕ, хăш чухне хĕвелрен питĕ инçетре пулаççĕ. Кометăсем хĕвел патне çывхарнă чухне анчах курăнаççĕ. Хăш кометăсем хĕвел патне вуншар çултан сывхараççĕ, хăшĕ темиçе вун çултан тин пĕрре хĕвел патне çывхарат, хăше çĕршер çултăн тин пĕрре хĕвел патне пырса пире куранакан пулат. Кометăсенчен нумайĕшĕ телескоп витĕр анчах курăнаççĕ, ахаль куçпа курăнмаççĕ. Ахаль куçпа курăнакан кометăсем хĕвел патне çывхарсан, епĕр вĕсене лайăхах куратпăр. Вара кометă вăрăм хӳре пек, темиçе ерне хушшине курăнат. Кометă темиçе вунă çул хушшинче анчах курăнма пултарнă пирки астрономире пăлăшман çынсем вăл курăнма пуçласан ун çинчен тем те пĕр калаçма тытăнаççĕ. Хăшĕ пĕри, вăл вăрçă пуласине пĕлтерет, теççĕ, хăшпĕрисем хăранипе тата ытти йапаласем те шухăшласа кăлараççĕ. Анчах кометă хăйĕн çулĕпе татах малала кайса, хĕвелрен чылай инçе кайса каллех курăнми пулат. Тата темиçе вунă çул иртсен татах хĕвел патне çывхарса курăнакан пулат.

Кометăсем пĕр йенчен те планетăсем пек мар. Планетăсем пысăк, чăмăр шар пулаççĕ. Кометăсем вĕтĕ пайсенчен, чулсенчен тăраççĕ. Çак вĕтĕ чулсем сапаланчăк ушкăн тăваççĕ. Çапла кометăсене чулсен кĕтӳвĕсем теме те йурат. Çак чулсен хушшинче пушă вырăн темĕн чухлĕ пулат. Чи хĕрринчи чултан тепĕр йенчи чи хĕрринчи чул патне çитме темиçе вунă пин километр та пулат. Пĕтĕм чулсене пĕрлештерсен, вĕсенчен çĕртен темиçе пин хут пĕчĕкрех шар пулмала. Кометăсен чулĕсем пур те пĕрле хĕвел патне пырсан, вĕсене хĕвел çути çутатнă пирки епĕр вĕсене пĕрлештерсе пĕр йапала пек куратпăр. Кометăсем хăй çулĕсемпе пынă чухне пĕр планетă патне çывхарсан, вара кометă ушкăнне кĕрекен чулсем планетă йеннеле туртăнаççĕ. Çапла вара çак чулсем малала, кометă хыçне пулса йулаççĕ. Çакăн пирки кометăсем пĕрмай тăсăлса вăрăмланса пыраççĕ. Кайрантарах кометă ушканне кĕрекен чулсем пĕтĕмпех сапаланса кайаççĕ те кометă пĕтет. Ун вырăнне кометăн еллипсла çулĕн не тăршшипех сапаланнă чулсем тăрса йулаççĕ. Вĕсем пурте тахçан ĕлĕк кометă çаврăнса çӳренĕ çул тăрăх хĕвел тавра çаврăнса çӳреççĕ.

Çĕр хĕвел тавра 365 кунта пĕрре çаврăнат. Çак çулта вăл тем инçе хут та ĕлĕк кометă çулĕ пулнă вырăнсен çывăхĕнчен иртсе кайат. Çак вырăнсенче хӳтте хăçан та тахçан ĕлĕк пулнă кометăран саланса йулнă чулсем пулаççĕ. Вĕсем патне çĕр çывхарнан, вĕсене çĕр хăй патнеле туртат. Çавăнпа вĕсенчен нумайĕшĕ хăйсен çулĕнчен пăрăнса çĕр йеннеле кайаççĕ. Хăшĕ çĕре хуса çитеймеççĕ, çулĕнчен анчах нумай пăрăнса кайаççĕ, хăшĕ тата çĕр патнех çывхарса çĕре те ӳкме пултараççĕ. Çак çĕр çине ӳкекен чулсене епĕр метеорсем тетпĕр. Метеор чулĕ малтан пире курăнмасăр вĕçет. Унăн хăвăртлăхĕ ахаль те çекундăра темиçе вунă километртан иртет. Çĕр туртнипе çак чулăн хăвăртлăхĕ пĕрмай ӳссе пырат. Çапла çĕрĕн атмосферине лекнĕ чухне метеорăн хăвăртлăхĕ хăш чухне пĕр çекундăра 80 километра та çитет. Çавăн пек хăвăрт пыракан чул сывлăша лексен, сывлăш сăтăрланнипе ăшăнса кайат, кайрантарах хĕрсе çитсе çапçутă çутатма пуçлат. Çутатма пуçласан тин епĕр çак метеора куратпăр. Сывлăша питĕ хăвăрт пырса кĕнĕ пирки çак чулсем çĕре çитеймеççĕ, сывлăшрах саланса кайаççĕ. Метеор сывлăшра саланнине епĕр хăш чухне метеортан хĕрлĕ хĕм йулса пынинчен те пĕлме пултаратпăр. Метеорсен пысăкĕшĕ пĕр пек мар Хăшĕ темиçе грамм, хăшĕ тата темиçе тоннă та пулаççĕ. Пĕчĕк метеорсем нихăçан та çĕре çитеймеççĕ, пысăккисем çĕр çине çитме пултараççĕ. Ыйту паракансем декабĕр уйăхĕнче чылай пысăк метеор курнă. Çавăнпа унăн çути те вăйлă пулнă. Анчах ку метеорăн пайĕсем пиртен нумай айакра ӳкнĕ пулмала. Çывăхра ӳкнĕ пулсан ăна сăнакансем тата сасă та илтмелечĕ, анчах ыйтакансем пĕри те сасă илтни çинчен пĕлтермеççĕ. Çапла унăн пайĕсем çĕре ӳкнĕ пулсан та пиртен инçетри вырăнсене лекнĕ пулмала.

Метеорсем хут те хăçан та пулма пултараççĕ. Вĕсем кăнтăрла та çĕрле те çĕр çине ӳкме пултараççĕ. Анчах кăнтăрла хĕвел çути вайлăрах пулнă пирки, епĕр кăнтăрла ӳкекен метеорсене часах сăнама пултараймастпăр. Уйар каç çителĕклĕ сăнасан йаланах метеорсене курма пулат. Пуринчен ытла вĕсене кĕркунне курма май килет. Кĕркунне çĕр вăрăм пирки уйар чухне те питĕ тĕттĕм пулат. Çавăнпа кăшт çутатакан пĕчĕк метеорсене те сăнама пулат. Унтан тата кĕркунне нойабĕр уйăхĕнче çĕр метеорсен потокĕ текен çул çывăхĕнчен иртсе кайат. Çавăнпа нойабĕр уйăхĕнче пĕр 5—6 çĕр ирттиччен метеорсене нумайрах курма пулат.

Пысăк метеорсен пайĕсем çĕре çитеççĕ. Вĕсене химилĕ анализ туса пăхса, вĕсен составне тимĕр, никĕл, тата ытти металлсем кĕнине пĕлнĕ.

Ĕлĕкрех, халăх аслăлăхпа паллашса çитмен вăхăтра, метеорсене „вĕри çĕлен" тенĕ. Ун чухне метеортан çутă хĕмсем таталса йулнине „вĕри çĕлен кăвар пăрахса хăварат" тенĕ.

Ф Кузьмин

Çĕмĕрлери Рабочисене пурăнмали çурт йĕр тăвакан кооперативлă йулташлăх

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени тăрăх

йулташлăх

хупăнни çинчен организацисене тата уйрăм çынсене пĕлтерет

Претензисем пур пулсан, вĕсене кăçалхи февралĕн 7-мĕшĕччен памала. Ку срук иртсен нимĕн те претензи те йышăнмаççĕ.

Правлени.

Шупашкарти Коммуналă строителствă техникумне

Политекономипе тата çĕнĕ историпе преподавателсем КИРЛĔ

Академи театрĕнче

Февралĕн 4-мĕшĕнче

ЧĂВАШЛА СПЕКТАКЛЬ

А. Н. Островский

„БЕДНОСТЬ НЕ ПОРОК"

(3 пайлă комеди)

Аслă режиççор К. И. ИВАНОВ лартат.

П. Т. МЕДИКОВ куçарнă.

Художник Н. Ф. БАЙАКОВ.

Музыкă йенĕпе И. Г. КУЗМИНА ĕçлет.

Талон № 100. Абонемент № 7. талон № 9.

Дирекци.

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 57. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашглавтреста. Заказ № 83. Тираж 15,00 52—94 см. 1—1 п. л.